24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ФЕВРАЛЬ
4
ЫТЛАРИКУН
28 (5743) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ПИРĔН МАРШАЛ КЛИМ ВОРОШИЛОВ

Совет Союзĕн Маршалĕ Климент Ефремович Ворошилов çуралнăранпа паян утмăл çул тултарчĕ. Паянхи кун, вăл утмăл çул тултарнă ятпа, Климент Ефремович Ворошилов юлташа Совет Союзĕнчи мĕнпур рабочисемпе колхозниксем, мĕнпур ĕççыннисем тата çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери малта пыракан çынсем хĕрӳллĕн саламласа ырă сунаççĕ.

Климент Ефремович Ворошилов юлташ — Ленинпа Сталинăн чи лайăх ученикĕсенчен пĕри, Сталин юлташăн соратникĕ, большевиксен партийĕпе совет халăхĕн, Хĕрлĕ Çăран чи юратнă руководителĕсенчен пĕри. Ахаль мар ĕнтĕ совет халăхĕ Ворошилов юлташа юрăсемпе сăвăсенче вĕçĕмсĕр савса мухтать.

Пирĕн атте аслă Ленин: халăх хушшинче талантсем иксĕлмен çăлкуçĕ пекех, тесе каланă. Климент Ефремович Ворошилов халăх хушшинче çуралса ӳснĕ чаплă талантсенчен пĕри, — вăл хăйĕн пĕтĕм вăй-хăвачĕпе, хăйĕн пĕтĕм таланчĕпе яланах халăхшăн, совет халăхĕн ырă пурнăçĕшĕн кĕрешсе пырать.

Климент Ефремович Ворошилов Донбасра рабочи семьинче çуралса ӳснĕ. Вăл çамрăк ача чухнех Донбасри рудниксемпе заводсенче ĕçлесе, капиталистсен йывăр эксплоатацине тӳссе курнă. Тата вăл кунтах, Донбасра, капиталистсен эксплоатацине тĕп тăвассишĕн кĕрешме рабочисене организацилекен революционер-большевик пулса тăнă.

Ленинпа Сталин большевиксен партин никĕсне хывнă вăхăтрах, 1903 çулта, Луганск хулинче (халĕ Ворошиловград) Ворошилов юлташ большевиксен партине кĕнĕ. Унтанпа вăл Ленин—Сталин кăтартса панă çултан ниçталла пăрăнмасăр, большевиксен партийĕн мĕнпур тăшманĕсене хирĕç кĕрешсе, рабочисене революциллĕ кĕрешӳре ертсе пынă.

Революцичченхи вăхăтрах Ворошилов юлташ темиçе хутчен те парти съезчĕсен делегачĕ пулнă. 1906 çулта Луганскри организаци ăна РСДРП IV-мĕш (Стокгольмри) съездне суйласа янă, çак съездра Ворошилов юлташ В. И. Ленинпа пирвайхи хут тĕл пулнă. Çавăн пекех Ворошилов юлташ партин V-мĕш (Лондонри) съезчĕн делегачĕ пулнă. Çав съездсенче, пурте пĕлетпĕр, большевиксемпе меньшевиксем хушшинче хаяр кĕрешӳ пынă. Большевиксем чăн-чăн пролетарисен представителĕсем пулнă пулсан, меньшевиксем вара пролетариатăн çурма-буржуаллă элеменчĕсен интересĕсене палăртса тăнă. Луганскри большевик-рабочисен делегачĕ Ворошилов юлташ партин съезчĕсенче яланах Ленинпа Сталин майлă тăрса, буржуазипе килĕшӳ тăвасси еннелле туртнă меньшевиксене, революцин тăшманĕсене, çĕмĕрнĕ, рабочи класăн интересĕсене яланах хăватлăн хӳтĕленĕ.

Рабочисен интересĕсемшĕн, революцишĕн тăрса, самодержавине хирĕç, капиталистсен пусмăрне хирĕç кĕрешнĕшĕн Ворошилов юлташа патша правительстви хытă хĕсĕрленĕ. 1907 çулта ăна патша жандармĕсем арестлесе Архангельск губернине ссылкăна янă. Революци ĕçĕнчен уйăрăлса ссылкăра пурăнасси Ворошилов юлташшăн калама çук йывăр пулнă, — хастар чĕрелĕ большевик ĕçе туртăннă. Вăл ссылкăран тарса Баку хулине, Сталин юлташ патне кайнă, унта большевиксен организацийĕсен вăрттăн ĕçĕсене активлă хутшăннă. Анчах кунта та патша жандармĕсем Ворошилов юлташ хыççăн йĕрлесех çӳренĕ, — 1908 çулта ăна каллех арестлесе ссылкăна янă, ссылкăра унăн 1914 çулти мартченех пурăнмалла пулнă.

Империализмлă пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче Ворошилов юлташ, вăрçă çине Ленин кăтартса панă пек пăхса, большевиксен партийĕн çул-йĕрĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнĕ.

1917 çул килсе çитнĕ. Ворошилов юлташ — Октябрьти Социализмлă Аслă революцин руководителĕсенчен пĕри.

Çамрăк Совет республики çине интервентсем тапăнаççĕ, çĕршывра граждăн вăрçи пуçланса каять. Совет республикин тăшманĕсене çĕнтерме большевиксен партийĕ, предатель-троцкистсене хирĕç кĕрешсе, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне организацилет. Ленинпа Сталин ертсе пынипе Ворошилов юлташ Хĕрлĕ Çăран чи пысăк организаторĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Рабочисемпе хресченсен хĕçпăаллă вăйĕсене организацилес ĕçе Ворошилов юлташ Луганскри рабочисен отрячĕне организацилесе ертсе пырассинчен пуçласа ярать.

«Хăрушă сехет килсе çитрĕ. Пирĕн революцие, эпир кĕрешсе илнисене вилĕмлĕ хăрушлăх юнаса тăрать. Хамăрăн кунçул мĕнле пуласси хамăртан килет.

Хамăрăн социализмлă тăван çĕршыва çăлса хăварасси хамăртан килет.

Пурте, пĕр çын юлмиччен, алла хĕçпăшал тытăр!».

Çапла чĕнсе каланă Ворошилов юлташ Луганскри рабочисене. Вăл ертсе пынипе рабочисем партизансен отрячĕсене организацилеНĕ, хăйсен вăйĕпех бронепоездсем тунă, оккупантсене хирĕç тăван çĕршывшăн çапăçнă. Ворошилов юлташăн отрячĕ Дон çеçенхирĕсем урлă Царицына, Сталин юлташ патне, Царицынри рабочисем патне тухнă. Кун хыççăн Ворошилов юлташ Хĕрлĕ Çăран соединенийĕсене — армийĕсене ертсе пынă.

Граждăн вăрçи çулĕсенче Царицына шурă çарсенчен сыхласа хăварни, Деникина, Врангеле, белополяксене çĕмĕрсе тăкни, контрреволюционерсем совет власне хирĕç тунă пăлхавсене çĕмĕрсе тăкни, Хĕрлĕ Çăран тата ытти чаплă çĕнтерĕвĕсем те Ворошилов юлташăн ячĕпе сыхăнса тăраççĕ. Вăл фронтсенче красноармеецсемпе командирсене паттăрлăхпа хăюллăх примерне кăтартса пынă. Вăл утлă çарпа пĕрле пĕрре кăна мар атакăра пулнă, пулеметран, тупăран хăй пенисем те пайтах хут пулнă. Красноармеецсемпе командирсем Ворошилов юлташа яланах вĕçĕмсĕр юратнă. Паттăрлăхпа хăюллăхшăн, Совет Союзĕн оборонине тĕреклетессишĕн вăя шеллемесĕр, пĕтĕм чĕререн тăрăшса ĕçленĕшĕн Ворошилов юлташа Совет правительстви нумай хут чи аслă наградăсем панă.

Граждăн вăрçи хыççăнхи çулсенче Ворошилов юлташ çар округĕсен командующийĕ, 1925 çултанпа, М. В. Фрунзе вилнĕ хыççăн, СССР Оборона Наркомĕ пулса ĕçленĕ. 1940 çултанпа вăл—СССР Халăх Комиссарĕсен председателĕн заместителĕ тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Оборона Комитечĕн председателĕ. 1935 çулта Ворошилов юлташа Совет Союзĕн Маршалĕн званине панă. Вăл 1921 çултанпа пĕрмаях ЦК ВКП(б) членĕ, 1926 çултанпа — ЦК ВКП(б) Политбюро членĕ.

Ворошилов юлташ ертсе пынипе, Хĕрлĕ Çар, Хĕрлĕ Флот, Хĕрлĕ авиаци — Совет Союзĕн чиккисене шанчăклăн хуралласа тăракан хăватлă вăй пулса тăчĕç. Совет Союзĕн оборона хăватне мĕнле тĕреклетсе пыни çинчен Ворошилов юлташ партин XVIII съезĕнче каласа **пачĕ.**

«Пирĕн çара,—тесе каланă Ворошилов юлташ,—никам та çĕмĕрме пултараймасть. Вăл пирĕн партин ачийĕ пулса тăрать, вăл унăн чи паха творенийĕ, парти, пирĕн правительство тата халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин кăтартнине социализмлă тăван çĕршывшăн çапăçма тата çар присягин таса сăмахĕсене ĕçе кĕртме вăл яланах хатĕр...». Хĕрлĕ Çар хăйĕн хăватне, Ворошилов юлташ ертсе пынипе, Хасан кӳлли патĕнчи тата Халхин-Гол патĕнчи, Польша пулнă территори çинчи çапăçусенче тата белофинсене хирĕç пынă вăрçăра кăтартса пачĕ. Сталин юлташ капитализмла йĕриташралăх çинчен яланах асра тытма хушни тăрăх, Ворошилов юлташ пире Совет Союзĕн оборона хăватне малашне те тĕреклетсе пыма чĕнет.

Климент Ефремович Ворошилов юлташ — Сталин юлташăн чи çывăх соратникĕ, социализм строительствишĕн пынă кĕрешĕвĕн паллă руководителĕсенчен пĕри, вăл яланах партин тĕп çулийĕрĕшĕн, партин тата халăхăн мĕнпур тăшманĕсене хирĕç хăватлăн кĕрешсе пырать.

Ворошилов юлташ — Совет Союзĕн Маршалĕ — совет халăхĕпе яланах тачă çыхăнса тăрать, вăл хăйне нихăçан та мăнна хумасть. 1937 çулти декабрьте вăл, Минск хулинчи суйлавçăсен пухăвĕнче çапла каланă: «Юлташсем, кунта ман çинчен каланă ырă сăмахсене эпĕ вĕсем пурте пирĕн аслă Ленин—Сталин партийĕ çинчен каланă сăмахсем пулассĕ тесе шутлатăп. Эпĕ хамăрăн пархатăнăвăлĕ пулса тăратăп,—эпĕ халăхшăн мĕнле те пулин тава тивĕçлĕ ĕç тунă пулсан, эпĕ ăна хамăрăн партие пула, хамăрăн çулпуçĕ Сталин юлташа пула тунă».

Хаклăран та хаклă Ворошилов юлташа, вăл утмăл çул тултарнă кун, пĕтĕм чĕререн саламлатпăр тата нумай çулсем хушши тухăçлă ĕçлеме ырă сунатпăр!

☆ ☆ ☆

Климент Ефремович Ворошилов юлташа

Большевиксен партин Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ сана, Ленинпа Сталинăн тĕрĕс соратникне, коммунистла партин активлă строителĕсенчен пĕрне, Совет государствин хĕçпăаллăх вăйĕсен чи паллă организаторне тата Хĕрлĕ Çăран мухтавлă полководецне, эсĕ утмăл çул тултарнă май, хĕрӳллĕн саламлаççĕ.

Эсĕ хăвăн пĕтĕм пурнăçна, ачаран пуçласах, рабочи класс ĕçĕшĕн, коммунизмшăн революциллĕн кĕрешес çĕрпе патăн. 1905—1907 çулсенчи вырăссен пĕрремĕш революцийĕ вăхăтĕнче эсĕ Донецкри революциллĕ рабочисен малти речĕсенче пырса кĕрешрĕн, Ленинпа тата Сталинпа пĕрле пирĕн большевикла партие туса пытăн. Эсĕ Октябрьти социализмлă аслă революцин активлă участникĕсенчен пĕри тата унăн Донбасри большевикла руководителĕ пулнă, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн малтанхи организаторĕсенчен пĕрийĕ пулнă. Эсĕ ертсе пынипе, Украинăри V-мĕш арми 1918 çулта Царицын патне геройла поход туса пынă, шурă казаксен контрреволюцийĕ хупăрласа илнĕ вырăнтан çĕмĕрсе тухнă. Эсĕ активлăн хутшăннипе, Пĕрремĕш Утлă çара туса хунă, вăл хăйне нихçан манми мухтавлăхпа витрĕ. Эсĕ унпа пĕрле çĕнтерӳллĕ те чаплă çула утса тухрăн, деникинла контрреволюцие çĕмĕрсе, шурă поляксене арканса, Врангелĕн шурă бандисене пĕтерсе хутăн.

Хĕрлĕ Çара ертсе пырас тĕлĕшпе эсĕ ывăнма пĕлмесĕр тата нумай çулсем хушши ĕçленине пула, Хĕрлĕ Çар хăрушă та хăватлă вăй пулса тăчĕ.

Санăн мухтавлă революциллĕ ĕçӳсен пур этапĕсенче те парти сана пĕлсе тăнă, эсĕ партин тата Совет халăхĕн тăшманĕсене хирĕç вĕçне çитикс хăюллăн кĕрешекен борец пулнă. Парти ĕçĕнчи руководитель, государство деятелĕ, Хĕрлĕ Çара тăваканĕ пулса эсĕ ывăнма пĕлмесĕр тата ăнăçлăн ĕçленине пула, сана пирĕн партипе совет халăхĕ юратаççĕ тата хисеплеççĕ.

Сана, пирĕн хаклă тус тата кĕрешӳри юлташ, пирĕн партишĕн, Совет государствишĕн малашне те ăнăçлăн ĕçлесе пымашкăн нумай çулсем хушши сывлăхлă пулма пĕтĕм чĕререн сунатпăр.

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ
ССР СОЮЗĔН ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔ.

МӲСКАВ, КРЕМЛЬ

ВОРОШИЛОВ ЮЛТАША

ХАКЛА КЛИМЕНТ ЕФРЕМОВИЧ!

ВКП(б) Чăваш обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ Сире, Эсир утмăл çул тултарнă май, большевикла хĕрӳллĕ салам ярăççĕ.

Чăваш халăхĕ, Сире саламласа, пролетариллĕ çирĕп революционера, нихăçан та иккĕленми большевик-полководеца, Совет Союзĕн чаплă маршалне, Ленинпа Сталинăн аслă соратникне саламлать. Сире, Климент Ефремович, Эсир хăвăр ăнлануллă пĕтĕм пурнăçăра, хăвăрта пур пĕтĕм вăйпа таланта этемлĕх телейĕшĕн — коммунизмшăн панине аса илсе, Чăваш халăхĕ чĕререн тавтăвать.

Чăваш халăхĕ çакна лайăх пĕлет: хальхи вăхăтра вăл пурăнакан телейлĕ пурнăç, ăна туса панă хальхи, тĕнчери лару-тăру çивĕчленсе пынă вăхăтри мирлĕ ĕç Совет правительствин тулашри ăслă политикине пула, ССР Союзĕнчи хĕçпăаллă вăйсен, пирĕн чаплă маршалсем, генералсемпе адмиралсем, большевикла парти тата аслă Сталин пăхса ӳстернĕ чаплă полководецсем ертсе пыракан хĕçпăаллă вăйсен пултарулăхне пула кăна пулма пултарнă.

Сывă пулччăр ССР Союзĕн хĕçпăаллă вăйĕсем!

Сывă пултăр Совет Союзĕн чаплă маршалĕ Климент Ефремович Ворошилов!

Сывă пултăр халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин!

ВКП(б) ОБКОМĔ
ЧАССР СОВНАРКОМĔ

АСРАН КАЙМИ ТĔЛПУЛУ

К. Е. Ворошиловпа тĕлпулнисене ĕмĕрте те манас çук. Климент Ефремовичра ленинла-сталинла гвардинчи полководец-большевикăн чи лайăх пахалăхĕсем палăрса тăраççĕ. Унăн шухăшĕсем яр-уçăмлă, çирĕп руководитель, çав вăхăтрах вăл простой, кăмăллă çын.

Малтанхи хут эпĕ Климент Ефремовичпа 1927 çулта тĕлпултăм. Вăл вăхăтра эпир, çамрăк конструкторсем, советăн пĕрремĕш хăватлă артиллери системисене тăвас тĕлĕшпе ĕçлеттĕмĕр. Акă пирĕн пата, конструкторски бюрона, ĕç пӳлĕмне Ворошилов юлташ пычĕ. Вăл килнишĕн эпир хавасланса хумхантăмăр. Эпĕ тата икĕ конструктор хамăрăн ĕç çинчен каласа пама телейлĕ пултăмăр.

Климент Ефремович пуринпе те тĕплĕн интересленчĕ, чертежсене тимлĕн пăхса тухрĕ, конструкци требованийĕсем çинчен уçăмлăн та кĕскен каласа парса асăрхаттарусем турĕ.

Малтанхи тĕлпулура Ворошилов ырă сунса каланă сăмахсем пире çунатлантарса çĕклерĕç. Çак сăмахсене лайăх астуса юлтăмăр: «Чи паха тата чи кирли вăл — çакна пирĕн совет конструкторĕсем туни пулса тăрать».

Тепĕр тĕлпулу вăл — нумаях та пулмасть 1940 çулти ноябрĕн 13-мĕшĕнче Кремльре пулса иртрĕ. Малтанхи кун мана тата ытти конструкторсене правительствăн пысăк награди панă. Эсĕ Климент Ефремович хăйĕн ĕç кабинетĕнче хаваслăн йышăннă. Ăлăкран кĕме ĕлкĕрсенех, вăл хирĕç ухса кĕтсе илчĕ, алăсене хытă чăлăртарĕ, ăшшăн сывлăх сунса саламларĕ.

Сĕтел хушшине лартăмăр.

— Тен, чей ĕçетпĕр? — сĕнчĕ Климент Ефремович. Чей ĕçнĕ хушăра гуслă каласу пуçланса кайрĕ.

Ворошилов юлташ пирĕнпе нумай ĕçсем çинчен каласрĕ. Боевой техникăна тивекен япаласем çинчен те каларĕ вăл, пирĕн умма çĕнĕ задачăсем лартрĕ, пурнăç ыйтăвĕсем çинчен те каласрăмăр. Вăл хăйĕн хаваслăхĕпе, савăнăçлăхĕпе пире те хаваслантарса ячĕ. Икĕ сехет хушши пынă каласура нумай савăнăç кӳчĕ. Климент Ефремович çамрăк çын пекех сывлăхлă, маттур тата çирĕп пулни уйăрăмах хаваслантарчĕ.

Ворошилов юлташ 60 çул тултарчĕ. Вăл татах та нумай-нумай çулсем хушши пурăнтăр. Ăна пурăнма, хăйĕн хăюллă ĕçĕпе тунă результатсемпе савăнма, пирĕн юратнă социализмлă тăван çĕршывăн хăватлă, яланах тĕрекленсе пыракан хĕçпăаллă вăйĕсене туса пыма пĕтĕм чĕререн ырă сунар.

КРУПЧАТНИКОВ.
Социализмлă Ĕçĕн Геройĕ, технически войскăсен майорĕ.

СЛЕТ ЧĔНСЕ КАЛАНИНЕ ĔÇПЕ ОТВЕТЛЕР

Енер Шупашкарта ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксен республикăри слечĕ хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. Слетра ялхуçалăхĕнчи специалистсем, бригадирсем, трактористсем, колхоз председателĕсем, выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем пурĕ 273 çын пулчĕ. Вĕсем пурте слета йĕлтĕрсемпе килчĕç. Слета килнĕ делегатсен йышĕнче малта пыракан колхоз çамрăкĕсем — Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсем чылай. Вĕсем хушшинче выставкăн пысăк ылттăн тата пĕчĕк кĕмĕл медалĕсемпе наградăланисем те пур. Сăмахран, йĕтĕнкантăр бригадин бригадирĕ Семенова (Улатăр р.), Порфирьева доярка (Канаш р.) тата ытти сем те.

Пирĕн республика 1940 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕ. Çуракине вăхăтра ирттернĕ, уборка ĕçĕсене срокра вĕçленĕ колхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. ЦК ВКП(б) тата СНК СССР «Тырпула пухса кĕртессипе ялхуçалăх продуктисен заготовкисем çинчен» йышăннă решенипе хавхаланса çĕкленнĕ колхозниксем тырпула пухса кĕртнĕ çĕрте ĕç çине социализмла пăхнин образецĕсене кăтартрĕç, палăртса хунă нормăсене ирттерсе тултарса пычĕç. Çаксем пурте ĕнтĕ тырпула ирттнĕ çулхисенчен чылай лайăхрах, чылай кĕске срокра пухса кĕртме май пачĕç. Ялхуçалăхĕн ирттнĕ çулти ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлес çĕрте комсомол организацисем пысăк вырăн йышăнчĕç, вĕсем колхозсене тимлĕн пулăшса пычĕç, ку ĕçре колхозниксене пример кăтартрĕç.

Чепкас-Никольский (Шăмăршă р.) колхозĕнчи комсомол организацийĕ сахал мар пуçарулăх кăтартрĕ, тырпулсене вăхăтра пухса кĕрес çĕрте колхоза пулăшрĕ. Комсомол организацийĕ пуçарнипе хирте талăкĕпе ĕçлессине организацileнĕ. Комсомолецсем колхоз ĕçĕнче малти ретре пынă, кашни комсомолец пĕр кун хушшинче 5—7-шер ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Кашни кунах стена хаçачĕсем кăларса тăнă, хаçатсем вуланă, каласусем ирттернĕ т. ыт. Кун пек паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕ организацисем республикăра татах та нумай.

Хальхи вăхăтра колхозсенчи комсомол организацийĕсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса пыраççĕ. Сăмахран, Молотов ячĕпе тăракан колхозри (Вăрнар р.) комсомолецсем пуçарнипе 3000 лав торф хатĕрлесе уя кăларнă, 268 лав кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Тăвай районĕнчи комсомолецсем агротехникăна вĕренес енĕпе лайăх ĕçлеççĕ. Кунта районĕпе ВЛКСМ райкомĕ членĕсенчен 24 çын, пуçламăш организаци секретарĕсенчен 62 çын агротехникăна çине тăрса вĕренеççĕ. «Шордан» колхозри (Сĕнтĕрвăрри р.) комсомолецсем ялхуçалăх машинисене йĕркене кĕртсе пуçтарса лартас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ, вĕсем юр айĕнче ларакан машинăсене пуçтарса лартнă т. ыт.

Çавăн пекех, малта пыракан колхозсенчи комсомолецсем вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес, вĕсене пăхса ӳстерес, вĕсен продуктивлăхне лайăхлатса хăпартас тата çамрăк вылăхсене йышăнса илсе сыхласа ӳстерес тĕлĕшпе те пархатар лă ĕçсем туса пыраççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнче Киров тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсенчи комсомолецсем пуçарнипе сысна витисем тата чăхĕпсем валли çуртсем тунă. Лаш-Таябари (Елчĕк р.) колхоз çамрăкĕсемпе комсомолецсем выльăх карташĕпе витесене тасатса йĕркеленĕ, вĕсем выльăх пăхакансене куллен пулăшса пыраççĕ.

Нумаях пулмасть выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес çĕрте ĕçлекен çамрăксен районсенчи канашлăвĕсем пулса иртрĕç. Çав канашлусем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тунă ситĕнӳсене палăртнипе пĕрлех, комсомолăн хăшпĕр организацийĕсем ку ĕçе çителĕксĕр хутшăннине кăтартрĕç. Ку тĕлĕшпе комсомол организацисен пикенсе тытăнмалли ĕçсем чылай-ха. Уйăмах, çамрăк вылăхсене йышăнса илсе вĕсене пăхса ӳстерес тĕлĕшпе колхозсенчи комсомолецсен пикенерех ĕçлемелле.

Слета пухăнакан çамрăксем çак юлашки ик-виç кун хушшинче чылай паха ĕçсем турĕç. Вĕсем çула майлă вуншар колхозра пулса уйăрăм колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслерĕç, ялхуçалăх ĕçĕнчи стахановецсемпе тĕл пулса калаçрĕç, пĕрпĕрин опычĕсемпе паллашрĕç. Паллах, çак паха ĕçсем çуракине хатĕрленессине вăйлатас çĕрте пысăк пулăшу параççĕ.

Слетăн тепĕр пысăк пĕлтерĕшлĕ вăл—республикăри 273 çамрăк йĕлтĕрсем çине тăрса вуншар, çĕршер километр таран килнинче пулса тăратъ. Слета йĕлтĕрсемпе пухăнни — колхозсенче физкультурăпа спорт ĕçне вăйлатма пулăшмалла. Слет участникĕсен ялсене саланнă хыççăн, колхоз производствинче: бригадăра, фермăра, машинно-тракторнăй станцинче стахановла ĕçленипе пĕрлех, паллă физкультурниксем пулса тăмалла. Вĕсем колхоз çамрăкĕсене физкультурăпа спорт ĕçне явăстаракан организаторсем пулмалла.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксен республикăри слечĕ 1940 çулти ялхуçалăх ĕçĕсен итогĕсем тата кăçал кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Пивоваров юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад хыççăн Иванов (Вăрнар р.), Слугайкин (Хĕрлĕ Чутай р.) тата Спиридонов юлташсем тухса каларĕç.

Слет халăхсен аслă çулпуçĕ, юратнă Сталин юлташ патне саламлă çырăма йышăнчĕ. Çавăнпа каçхи лар хупăнчĕ.

Енер слет делегачĕсем кунĕпех ялхуçалăхĕн тĕрлĕ отраслисем тăрă секцисенче ĕçлерĕç.

Каçхине слетăн юлашки ларăвĕ пуçса иртрĕ. Пренире тăхăр çын тухса каларĕ. Çамрăк стахановецсен пĕрремĕш слечĕ республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-сен работникĕсем, ялхуçалăхĕнчи специалистсем патне чĕнсе çырнă çырăва йышăнчĕ.

ССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Академик С. А. Чаплыгина Социализмлă Ĕç Геройĕн званине парасси çинчен

Аэродинамика облаçĕнче боевой самолетсен хăвăртлăхĕсене пысăккăн ӳстерме анлă çулсем ӳсса паракан пысăк та чаплă научнăй çитĕнӳсем тунăшăн наукăн тава тивĕçлĕ деятельне, ЦАГИ профессорне, теориллĕ аэродинамикăн совет шкулĕн руководительне, малтан Ленин орденĕпе тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă Сергей Алексеевич Чаплыгин академика, унăн наукăри ĕçĕ пуçланнăранпа 50 çул тулнă кун — **Социализмлă Ĕç Геройĕн** званине парас тата **Ленин орденĕпе «Серп и молот» ылттăн медаль** парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти февралĕн 1-мĕш.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксен республикăри слечĕ

Февралĕн 2-мĕшĕнче Шупашкарти пионерсен центральнăй çуртĕнче ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксен республикăри пĕрремĕш слечĕ уçăлчĕ. Слета ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ Д. Пароятников юлташ сăмах каласа уçрĕ.

— Паян, — тет Пароятников юлташ,— ялхуçалăхĕнчи çамрăк стахановецсем хăйсен 1940 çулти ĕçĕсене пăхса тухса вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинчен сӳтсе-явма хăйсен пĕрремĕш слетне пухăнчĕç. Эсир, вăйлă тырпул мастерĕсем, выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен стахановецсем иртнĕ çулта ялхуçалăхĕнче пархатарлă пысăк ĕçсем турăр пулсан, кăçал татах та лайăхрах ĕçлессе шансах тăмалла.

Пароятников юлташ делегатсем слета йĕлтĕрсемпе килнине уйăрăмах паллă туса çапла калать:

— Ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксем — вĕсем колхоз производствинче стахановла ĕçленĕ вăхăтрах, тăван çĕршыва çирĕп кăкăрпа тăрса сыхлама вĕренсе пыраççĕ, совет çĕршывĕн оборона вăй-хăватне тĕреклетеççĕ. Çакна слет делегачĕсем ик-виç кун хушши, сивĕ çанталăка пăхмасăр, 100—120 километр таран йĕлтĕрсемпе килни те лайăх кăтартса пачĕ.

Михайлов юлташ сĕннипе слет президиумне 25 çынран суйларĕç.

Унтан çавтери пысăк çĕкленӳпе нумайччен тăваллăн алă çупса, слетăн хисеплĕ президиумне ЦК ВКП(б) Политбюроне — **Сталин, Молотов, Ворошилов, Калинин, Каганович, Жданов, Андреев, Микоян, Хрущев, Берия тата Шверник** юлташсене суйларĕç.

1940 çулти ялхуçалăх ĕçĕсен итогĕсем тата кăçал кашни гектартан 10 пăтран кая мар тĕштырă туса илес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Пивоваров юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад хыççăн Иванов (Вăрнар р.), Слугайкин (Хĕрлĕ Чутай р.) тата Спиридонов юлташсем тухса каларĕç.

Слет халăхсен аслă çулпуçĕ, юратнă Сталин юлташ патне саламлă çырăма йышăнчĕ. Çавăнпа каçхи ларăвĕ пуçланчĕ.

Енер слет делегачĕсем кунĕпех ялхуçалăхĕн тĕрлĕ отраслисем тăрăшса секцисенче ĕçлерĕç.

Каçхине слетăн юлашки ларăвĕ пуçса иртрĕ. Пренире тăхăр çын тухса каларĕ. Çамрăк стахановецсен пĕрремĕш слечĕ республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-сен работникĕсем, ялхуçалăхĕнчи специалистсем патне чĕнсе çырнă çырăва йышăнчĕ.

Латвири ĕççыннисене страхлама—102 миллион тенкĕ

РИГА, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Латви ССР профсоюзсен центральнăй совечĕн социальнăй страховани бюджетне çирĕплетнĕ.

Хĕрарăмсене йывăр çын пулнă вăхăтра тата ача çуратнă хыççăн, вăхăтлăха ĕçлейми пулнă çынсене пособисем, ватăлнă тата инвалида тухнă çынсене пенси тӳлеме 64 миллион тенкĕ ытла пăхса хунă. Ачасен сывлăхне сыхлас енĕпе ĕçлекен учрежденисем тума 14 миллион тенкĕ пăхнă.

Физкультура ĕçне организацилеçĕре миллион тенкĕ расходлама палăртнă.

Кăçал ĕççыннисене страхлама мăнпурĕ 102 миллион та 342 пин тенкĕ панă.

КЛИМЕНТ ЕФРЕМОВИЧ ВОРОШИЛОВ ЮЛТАШ 60 ÇУЛ ТУЛТАРЧĔ

☆ ☆ ☆

ВОРОШИЛОВ ЛУГАНСКРА

Орденлă Ворошиловграда (ĕлĕкхи Луганска) пирĕн çĕршыври ĕççыннисем лайăх пĕлеççĕ: унăн аваллăхĕ — мухтавлă революциллĕ ĕçсем. Кунта Климент Ефремович Ворошилов ĕçленĕ, большевиксен речĕсене ӳстерсе çирĕплетсе пынă, класлă çапăçусене ертсе пынă, хĕçпăаллă пролетариатăн пирвайхи отрячĕсене туса йĕркеленĕ.

Вунă çул хушши ĕнтĕ хулара К. Е. Ворошилов ячĕпе тăракан революци музейĕ ĕçлет. Пысăк хисеплĕ экспонатсем—документсем, фото-ӳкерчĕксем тата художествăллă картинăсем Ленинпа Сталинăн шанчăклă ученикĕн—Ворошилов юлташăн çутă та нумай енлĕ пурнăçне тата революциллĕ ĕçĕсене кăтартса параççĕ.

Музейăн йĕрремĕш залĕнче Переездная станци патĕнчи 130-мĕш номерлĕ чугунçул будкин макечĕ тăрать. Çакăнта 1881 çулти февралĕн 4-мĕшĕнче К. Е. Ворошилов çуралнă. Художник Левченко тунă картина çинче çулти Клим хăма сарнă çул тăрăх колчедан тиенĕ пысăк тачкăна ярăнтарса пынине кăтартса парать. Çак йывăр ĕçшĕн Клим кунне вуншар пус илнĕ. Аялта скульптура: «Клим помещик выльăхне кĕтнĕ çĕрте ашшĕне пулăшать».

1896 çулта Ворошилов юлташ «Дюмо» заводне (Алчевск станцинче) ĕçе кĕрет. Çавăнта, рабочисен пысăк коллективĕнче, унăн революциллĕ ăнланулăхĕ татăкланах çирĕпленсе çитет. Картинăпа юнашар—картограмма унта Донбасри хуласене, рудниксене тата заводсене кăтартса панă. Вĕсем—«Дюмо» заводри литейщиксен забастовки хыççăн вырăнтан вырăна куçса çӳренĕ çулсенче Климент Ефремович пырса çуренĕ хуласем, рудниксем, заводсем. Çав забастовка Климент Ефремович организациленипе тата вăл ертсе пынипе пулса иртнĕ. Климент Ефремовича «хура списока» кĕртнĕ, уççăнах полици асăрхаса тăнă, ăна ниçта та ĕçе илмен.

Луганскра К. Е. Ворошилов РСДРП Партине кĕрет, ăна хула комитечĕн членне суйласçĕ, вăл часах Луганскри рабочисен юратнă руководителĕ пулса тăрать.

1905 çулти февраль уйăхĕнче вăл Гартман заводĕнчи рабочисен стачкине организацилет. Иккĕмĕш залра художник Левченко ӳкернĕ картина пур. Картинăра çакна кăтартса панă: заводăн тĕп площадĕ, площадьре рабочисен митингĕ. Трибуна çинче—Ворошилов.

«Куратăр-и, юлташсем,—тет вăл, — эпир ĕçлеме пăрахрăмăр, завод чарăнса ларчĕ. Капиталистсем пирĕнсĕр пурăнма пултараймаççĕ. Пĕтĕм вăй рабочире!»

Рабочисен Ворошилов ертсе пынипе пулса иртнĕ тимлĕ, пĕтĕçӳллĕ выступленийĕ ăнăçлăн вĕсленнĕ. Администрацин забастовщиксем кăларса тăратнă требованисене пурнăçа кĕртмелле — çĕç кунне 9 сехете çити чакармалла, цехсемпе мастерскойсен представителĕсен депутатла пухăвне йышăнмалла пулса тăнă. Депутатсен пухăвĕн председателĕ пулма рабочисем Климент Ефремовича суйланă. Депутатсен пухăвĕнчен часах рабочисен депутатчĕн Совечĕ пулса тăнă.

Художник Владимирский ӳкернĕ картинăра 1905 çулта заводри çав забастовка вăхăтĕнче К. Е. Ворошилова арестленине кăтартса панă. К. Е. Ворошилова тискеррĕн хĕнесе тăкнă, кайран Луганскри тĕрмене хупса лартнă.

Зал центрĕнче—скульптор Грушевский тунă скульптура, вăл К. Е. Ворошилов хăй 1905 çул пуçламĕшĕнче организацине, вăрттăн типографире ĕçленине кăтартса парать.

Типографине полици шыраса тупасран сыхланса, ăна пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарса çӳренĕ. Полицине аташтарса ярас тесе, çапла тунă: малтан прокламацисене Алчевскра (Луганскран 40 çухрăмра), кайран вара Луганскра салатса çӳренĕ. Полици Алчевскра тĕпĕ-йĕррипех тустарса çӳренĕ, анчах типографине тупайман. Типографи Луганскра питех те тĕплĕн пытанса ĕçленĕ.

Художник Владимирский ӳкернĕ пысăк картина çинче Вергун вăрманĕнче Луганскри боевой дружинăна çар ĕçне вĕрентнине кăтартса панă. Группа центрĕнче—Климент Ефремович. Вăл рабочисене винтовкăна мĕнле тыни çинчен, мишеньсем çине мĕнле пемелли çинчен ăнлантарса парать. Боевиксем хăйсен учителĕ мĕн каланине тимлĕн итлеççĕ.

Климент Ефремович Луганскри рабочисене çар ĕçне вĕрентнĕ кăна мар, тата хăй организациленĕ боевой дружина валли хĕçпăалсем те тупса панă. Хĕçпăшал таврашне вăл Финляндирен кӳрсе килнĕ. Картина çинче çакна та кăтартса панă.

Донбасс тулашĕнче инçетре те Климент Ефремовича лайăх пĕлнĕ. Унăн яланах сыхланса пурăнмалла пулнă. Витрина çинче документ пур—Юзовски охраннăй отделени Екатеринослави жандармери управленине 1907 çулти январĕн 20-мĕшĕнче янă секретла донесени: «агентура урлă илнĕ сведенисем тăрăх, социал-демократсен Луганскри организацийĕн активлă деятелĕсем çаксем пулса тăраççĕ: Гартман заводĕнчи слесарь Фридкин тата электричествăллă подъемнăй кран машинисчĕ Ворошилов».

Лондонран, РСДРП V съездĕнчен таврăннă хыççăн, Климент Ефремовича арестленĕ, 1907 çулти октябрь уйăхĕнче Архангельск губернине 3 çуллăха ссылкăна янă.

Музейри материалсем Луганскри слесарь-революционерăн — К. Е. Ворошиловăн çак тапхăрти тата ытти тапхăрсенчи пурнăçне тата революциллĕ ĕçне кăтартса параççĕ.

4-мĕш залра Климент Ефремович Ворошиловăн 1917 çулти ĕçĕсене кăтартса панă. Март уйăхĕнче, рабочисем çине тăрсах ыйтнипе, Партин Центральный Комитечĕ килĕшӳ панă тăрăх, Ворошилов юлташ хăйĕн тăван хулине тавăрăннă. Фильберг, Костенко тата Козодоев художниксем ӳкернĕ картина Климент Ефремовича рабочисем кĕтсе илнине кăтартса парать. Пӳлĕм туллиех рабочисем. Алăк уçăлать, Климент Ефремович пырса кĕрет. Рабочисем пĕтĕм чĕререн савăнаççĕ. Кашниех ăна ыталаса чăмăртама васкаççĕ.

Музее пыракан çын «Донецкий пролетарий» хаçатăн фото-ӳкерчĕкĕсене, Климент Ефремович ертсе пынипе Луганскри большевиксем совет власăн çĕнтерĕвĕ патнелле шанчăклăн пыни çинчен каласа паракан документсемпе картинăсене курать.

1917 çулти ноябрь уйăхĕнче Петрограда кайнă Климент Ефремович Луганскри красногвардеецсене пĕр вагон хĕçпăшал ярса панă. Çак хĕçпăшала Украинăри Луганскри националистсем хăйсен аллине çавăрса илме хăтланнă. Художник Глушенко ӳкернĕ картина çинче А. Я. Пархоменко ертсе пыракан 20 красногвардеец хĕçпăшал тиенĕ вагона туртса илнине, ăна штаб патнелле ярăнтарса пынине кăтартса панă.

«Хăрушă сехет килсе çитрĕ. Пирĕн революци умĕнче, эпир çĕнтерсе илнисем умĕнче вилĕмлĕ хăрушлăх тăрать. Хамăрăн кунçула татса парасси пирĕн хамăртан килет.

Хамăрăн социализмлă Тăван çĕршыва çăлса хăварасси пирĕнтен хамăртан килет. Пурте пĕр çын юлмичченех хĕçпăшал тытар!»

Çапла ĕнтĕ 1918 çулти март уйăхĕн пуçламĕшĕнче Климент Ефремович Ворошилов Луганскри пролетарисене оккупантсене хирĕç çапăçăва тухма чĕннĕ.

Луганскри рабочисенчен Луганскри социализмлă партизансен пĕрремĕш отрядне туса йĕркеленĕ. Гартман заводĕнче виçĕ кун хушшинче рабочисем пульмановски икĕ вагонран бронепоездсем туса хунă. Çак ĕçе Ворошилов юлташ ертсе пынă.

Ворошилов отрячĕ Конотоп, Родаково патĕнче оккупантсене хирĕç кĕрешни çинчен, Дон çеçенхирĕсем урлă Царицын патне геройла поход туса тухни çинчен тата Ворошилов граждан вăрçин фрончĕсенче туса ирттернĕ боевой ĕççем çинчен музейри картинăсемпе скульптурăсем, фото-ӳкерчĕксем пе документсем уççăн каласа параççĕ.

5-мĕш залри материалсем 1919 çулта «Острая могила» патĕнче Луганска Деникин войскисенчен паттăрăн хӳтленине кăтартса параççĕ. Хулана хӳтленĕ çĕрте арçынсемпе пĕрлех хĕрарăмсемпе ачасем те пулнă.

Экспозици Хĕрлĕ Ялав орденĕпе вĕçленет, вăл орден—Луганскри пролетарисене панă награда.

Музея халăх питех те юратса çӳрет. Ăна уçăранпа 2 миллион çынна яхăн пырса курнă. Пролетариллĕ революционерăн пурнăçĕпе паллашса, ĕççыннисем Климент Ефремович пек çынсем пулма, Ленин—Сталин партине пĕтĕм чĕререн парăннă çынсем пулма, халăх тăшманĕсене нимĕн хĕрхенмен, хăюллă, çине тăракан çынсем, пур ĕçре те Сталин çулĕпе пыракан çынсем пулма тăрăшаççĕ.

И. А. ПАЩЕНКО.

К. Е. Ворошилов ячепе тăракан революци музейĕн директорĕ.
Ворошиловград хули.

АЛЛА ХĔÇПĂШАЛ ИЛЕР!

(П. Гаврилов çырнă „Луганцы“ ятлă повеçрен)

Хула думинче вунă сехет хушши ĕнтĕ пĕр канмасăр шавлă пуху пырать. Вăл пухăва хулари пуянсем, завод хуçисем тата исправник хăй пухнă.

Рабочисем 8 сехетлĕ ĕç кунĕ тума ыйтнипе буржуазин ирĕксĕрех килĕшмелле пулнă. Ирĕксĕрех килĕшмелле пулнă, мĕншĕн тесен нимĕнсĕр тăрса юлассинчен хăранă...

Анчах та пирвайхи ораторăн сăмахне, пухура тухса калас умĕн хăйĕн тилĕ тирĕнчен тунă кĕрĕкне вешалка çине çакса хăварнăскерĕн сăмахне, рабочисем итлесшĕн пулмарĕç. Рабочисем пурте ура çине сиксе тăчĕç, трибуна çывăхнерех пырса, пĕр-пĕринчен ăмăртмалла çапла кăшкăраççĕ:

— Хупса лартнисене ирĕке кăларăр!

— Халех Ворошилова ирĕке кăларăр! Ситет каласа!

— Хĕçпăшал! Рабочи дружинисене хĕçпăшаллантарма ыйтатпăр.

Хула пуçлăхĕ шăнкăравпа шăнкăртаттарать. Унăн лента çинчи пысăк медалĕ тарланă мăйĕ çине маятник пек силленсе перĕнет.

— Господин юлташсем! Эпĕ те ирĕклĕхшĕн тăнă, халĕ те тăратăп.

— Эсĕ тăнă, Ворошилов ларать. Ворошилова ирĕке!

— Халĕ Ворошилов тăтăрха, эсĕ ларса пăх!

— Ворошилова ирĕке! Хĕçпăшал!

Ĕç шӳтле мар иккенне сиссе, исправник çавăнтах Ворошиловпа унăн юлташĕсене ирĕке кăларма приказ сырса тĕрмене янă. Рабочисем вара делегаци суйланă та тĕрме патне кайнă. Урамра часах Ворошилова кăларма кайни çинчен пĕлеççĕ. Тĕрме патне пиншер çын пынă.

Пуху организаторĕсем халь, рабочисем шăппăн ларaççĕ пуль тесе шутласа, тепĕр оратора сăмах параççĕ. Анчах рабочисем ун еннелле çавăрăнса та пăхман.

Туссем Клима парнесемпе кĕтсе илме шутларĕç. Хаклă вăхăта сая ярас мар тесе, рабочисем çĕлĕксене хывса зал тăрăх укçа пуçтарса çӳреме пуçланă. Вăл укçапа хĕçпăшал туянмалла. Кĕске вăхăт хушшинчех икĕ пин тенкĕ укçа пуçтарнă.

Хула пуçлăхĕ шăнкăравне шăнкăртаттарнă, лăпланма ыйтнă, кĕтнĕ, анчах рабочисем унран та хĕçпăшал илме укçа ыйтсан, пуçлăх вара луганецсемпе пуçпулса пурăнасси пĕтсе ларнине ăнланса илнĕ.

Хула пуçлăхĕ хулпуççи çинчи знакне—медальне хăйпăтса илчĕ, ăна урайне ывăтса ячĕ, унтан хăйне хăй шелленипе чĕтресе, çилли тулнипе çапла кăшкăрса ячĕ:

— Мейĕр! Пуçпулса тăрăр! Эпĕ текех ĕнтĕ хула пуçлăхĕ мар!

Залра пĕр вăхăтлăха шăпланчĕç, унтан савăнăç кулли тăвăл пек янăраса кайрĕ, алă çупнă, кăшкăрнă.

— Юлашкинчен ырă господин ăнланса илчех! Хамăрах йĕркелĕпĕр, сана калле чĕнмĕпĕр!

— Пирĕн пуçлăхăн пуçĕ çук, тесе калаççĕ!

— Çапла ĕнтĕ, халĕ вăл пуçлăх маррине сиссе илчĕ пулсан унăн пуçĕ пур!

Вихри враждебные веют над нами...

тесе юрлама пуçларĕ луганецсем юратнă юрра Тараныч. Ун хыççăн пĕтĕм залри çынсем пурте юрласа илеççĕ.

Хула думин алăкĕсем хупăнма пĕлмерĕç. Пухăва организацилекенсем хальхинче, швейцарсем пулăшмасăрах, хăранипе хăйсен хаклă йышши кĕрĕкĕсене васкаса тăхăнаççĕ те килĕсене кайма васкаççĕ.

В бой роковой мы вступили с врагами... — тенĕ сасăсем думăн ярах уçса янă чӳречисенчен илемлĕн илтĕнсе сарăлаççĕ.

* * *

Тĕрмере сив чир тытнă пекех пулчĕ. Коридорсем тăрăх надзирательсем, хаяр килхуçи хĕрарăмĕ пăлхатнă тараканлă пек, рабочисем ĕçлĕксене хывса, ĕçлеме тытăнчĕç. Чул сарнă урай çине салтаксем хăйсен пăшал приклачĕсемпе шакканă.

Пĕрле лармалли камерăсене хупнисене телей пулчĕ; вĕсем тачă ушкăнпа тĕрме патне утса килекен рабочисене чи малтан курчĕç.

Клим калама çук хытă хавхаланнипе ни ура çине тăма, ни выртма пултараймасть. Алăк та тӳсме пултараймарĕ, вăл кисренсе илчĕ. Алăк уçăлсан, тӳрех Ворошилов савăнăçпа кулса тăни курăнса кайрĕ.

— Кăшт çеç тӳссе тăрăр: вăрахах пырас çук курăнать. Эпĕ питĕрсе те хумастăп!

Юлашкинчен тĕрме начальникĕ перçе çитрĕ:

— Эсир ирĕкре!

Клим камерăран тухмасть. Тĕрме начальникĕ тĕлĕнсе кайнипе тата тепĕр хут:

— Эпĕ сире калатăп: эсир ирĕкре,— тесе хушрĕ.

— Ытти юлташсемпе ĕç мĕнле? — ыйтрĕ Ворошилов.

Тĕрме начальникĕ хулпуççисене сикерсе илчĕ.

— Господин исправник хушнипе сире тата ытти мĕнпур рабочисене, Гартман заводĕнче забастовка тунăшăн айăпланăскерсене, ирĕке кăларма хушнă... Шансах тăратăп, ку вăрăм вăхăта мар. Камерăран тухса кайма ыйтатăп.

Клим тĕрме начальникĕпе надзирательсем çине тарăхнипе кăшт кăна коридор тăрăх чупса каймарĕ: вĕсем тимĕр шапа евĕрлĕ шуса утнă пек туйăннă ăна. Тутăхса пĕтнĕ уçăсен юлашки сассийĕ. Тимĕр калитка хуллен уçăлса кайрĕ.

— Климент! Ырă тус!

— Ворошилов юлташа ура-а-а-а!

— Тĕп пултăр самодержави! Рабочи класа ура-а-а! — Ура-а-а-а!

Тахăшĕ шăрт пек чикекен уссиллĕ тутипе Ворошилова нумайччен хытă чуптурĕ, ăна сывласа илме те кансĕр пулчĕ. Унтан ăна алăсем çинче тытса çĕклерĕç.

Халăх ушкăнĕ хушшине пынă чухне вăл çӳлте, сывлăшра кăвакарчăнсем вĕçсе çӳренине тата рабочи çурчĕсен чӳречисем йăлтăртатнине курчĕ. Кăвакарчăнĕсем те, чӳречесем те сутăлса тухакан хĕвел пайăркисемпе пĕренсе ларнăн туйăнать.

Çапла ăна хула думи çурчĕ патне çитичченех алăсем çинчен вĕçертмерĕç, дума çурчĕ ăшне кĕрсен, ăна алăран алла парса малалла ăсатнă. Ăна хавасланса ларакан залри çынсем витĕр йăтса трибуна патнех илсе пычĕç.

Акă ĕнтĕ, тусĕсем ирĕке кăларттарнă Клим каллех вĕсем хушшинче тăрать.

Тĕрмери шăплăх хыççăн, саламласа кăшкăрнисем, нумай саслă шав унăн хăлхисене питĕрсех лартрĕ, ун çине темĕскер йăтăнса аннă пекех туйăнчĕ. Пĕччен лармалли камерăра пиллĕк уйăх хушши ларни ахаль иртмен. Вăл ура çинче аран-аран тытăнса тăнă, ăна хăй çуртра тăман пек, таçта, пушхирте, уçă сывлăш вĕрсе тайăлтарнă çĕрте тăнă пек туйăнчĕ.

Вăл пĕр сăмах та калама пултараймарĕ. Анчах вăл çавах большевик пулнă. Вăл трибуна çинче тăнă. Шăпланнă зал вăл сăмах каласса кĕтнĕ, пĕтĕм Луганск унăн сăмахне кĕтнĕ. Вăл ĕнтĕ калама тивĕçлех.

— Революци пуçланчĕ, юлташсем! — тенĕ Клим хăйĕн хаклă юлташĕсем еннелле çавăрăнса пăхса. — Юлташсем, алла хĕçпăшал илер!

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран ылтăмалла): С. К. Тимошенко, С. М. Буденный тата К. Е. Ворошилов юлташсем (1920 çулти декабрь).

(ТАСС фото-ӳкерчĕкĕ).

Полководец, соратник, юлташ

Хĕрлĕ Çар историнче К. Е. Ворошилов юлташ калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ун çинчен çак кĕске татăкьяра пĕтĕмпех каласа пама та май çук. Граждан вăрçин фрончĕсенче малăнхи кунсенчех, 1918 çулти ноябрьте çурĕ провод тăрăх Ворошиловпа калаçнă чухне, Сталин юлташ ăна çакăн пек характеристика панă:

«Командующий пулнă май, Ворошилов фронтăн хуçи пулса тăрать, вăл ĕçе хăй шутланă пек туса пыма пулăрать».

Сталин юлташ тӳрремĕнех ертсе пынипе, Ворошилов Царицына паттăрăн тĕлĕнĕ çĕре хутшăннă. Сталин тата Фрунзе юлташсемпе пĕрле, Ворошилов çурлĕ Çар Деникин çине, поляксем çине, Врангель çине çĕнтерӳллĕн таниса пырассине пурнăçа кĕртнĕ.

Фрунзе юлташ вилнĕ хыççăн, 15 çул яхăн вăхăт хушшинче, Ворошилов юлташ Çарпа Тинĕс ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ пулнă, кайран вара СССР Оборона Халăх Комиссарĕ пулса ĕçленĕ.

Вăл ертсе пынипе Советсен Çĕршывăн оборони çулран çулах тĕреклесе çитĕнĕ. Ворошилов юлташ партин XVIII съездне тулли правăпа çапла каласа пиçтерчĕ: XVII-мĕшпе XVIII-мĕш съездсем хушшинчи вăхăтра, 1939 çулне, пĕтĕм çар икĕ хута яхăнах ӳсрĕ. «Кадрти стрелковăй дивизисем, — тенĕ Ворошилов юлташ,—пирĕн халĕк пулничен вунă хут нумайрах... Çĕнĕ хĕрлĕ çар, ытти тĕрлĕ войскăсем çитех, хисеп енчен ӳсрĕ. Пирĕн утлă çар 52 процент ӳсрĕ... Танклă войскăсем 180 процент ӳсрĕç. Танксен паркĕ çеп енчен 191 процент нумайланчĕ. Çĕнемашинăсен хисепĕ 7,5 хут ӳсрĕ. Çĕнĕ войскăсенчи машинăсен хĕçпăлăн хăвачĕ, 1934 çултипе танлаштарăр, тăватă хута яхăнах ӳсрĕ...»

Ворошилов юлташ съезда совет артиллерийĕн питех те пысăк ӳсĕмĕ çинчен, çарсене артиллерипи çĕнĕ системипе хĕçпăшаллантарни çинчен, хирле вăйсемпе тапăннинчен сыхланмалли çĕнĕ хатĕрсем çинчен, Совет Союзĕн авиацийĕ ӳсни çинчен, унăн хăвачĕ 1934 çултипе танлаштарсан 7 миллион та 900 пин лаша вăйĕ чухлĕ ӳсни çинчен каласа пĕлтерчĕ.

Туллин мар каласа панă çак ӳсĕмсене, Совет Союзĕн оборони тĕрекленсе пынине кăтартса параканскерсене, тунă çĕрте Сталинăн чи çывăх соратникĕ тата тусĕ Ворошилов юлташ пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăнă.

Республикăри хĕçпăшаллă вăйсен руководителĕ тата полководецĕ пулса тăнă Ворошилов юлташăн кĕрешӳри çулĕ Царицын фронтĕнче пуçланнă. Большевик-пролетарий, Луганскри слесарь Ворошилов рабочисем хушшинче, шахтерсем хушшинче калама çук пысăк авторитетпа усă курнă. Оккупантсене хирĕç Донбасри рабочисен хĕçпăшаллă отрячĕсене çĕклесе, Ворошилов юлташ çав отрядсене белогвардеецла войскăсем йышăннă вырăнсем витĕр илсе тухнă, Царицына, Сталин патне пырса çитнĕ. Çав вăхăтран пуçласа Ворошилов юлташăн кĕрешӳри ĕçĕсем революцин çулпуçĕ аслă Сталин тӳрремĕнех ертсе пынипе пулса пынă.

Эпĕ Ворошилов юлташпа чи малтан 1918 çулти июльре Гашун станцинче тĕл пултăм. Вăл вăхăтра кунта питех те пысăк вăйсем пухăннă. Ун чухне кашни 100 хĕç, штыксем тытнă кашни рота, вăл революци ĕçне тĕрĕс туса пынă пулсан, пысăк часть тесе шутланнă. Çавăнпа та, паллах, Гашун станцинче пухăннă вăйсене питех те пысăк вăйсем теме пулнă. Гашун станцинче 12 пин боец пухăннă, вĕсем хушшинче 3 пине яхăн кавалеристсем пулнă.

Вăл кунсем—хăрушă кунсем пулнă. Гашунра Сальскри çынсен отрячĕ те пĕтĕмпех пухăннă, вĕсем кунта Сальскри çеçенхирсен çĕрĕсем урлă хăйсен арăмĕсемпе, ачисемпе пĕрле килнĕ. Пирĕнпе пĕрле 60 пине яхăн беженецсем пыратчĕç.

Йĕри-тавра белогвардеецсем çавăрса илсе хĕссе пынă. Тăшмансен атакисене хирĕç çапăçса, пире командовани хăш еннелле кайма хушассине пĕлмесĕр, эпир алли-урипех тăлланса тăнă: ун чухне Царицынри вăрçă ĕçĕсен руководителĕ пулнă Снесаревăн, Троцкий лартнăскерĕн тата ĕлĕк патша генералĕ пулнăскерĕн, распоряженийĕсем пире пĕтĕмпех чăрмантарса пынă. Анчах Сталин юлташ Снесарева вăхăтра асăрхаса илчĕ. Сталинпа Ворошилов юлташсем, Снесарева тата Троцкий директивисене хирĕç кайса, Гашун патĕнче тăнă отрядсенчен хăватлă вăй туса хума, вĕсем пулăшнипе чугунçул линине тăшмансенчен тасатса тухма, çапла майпа Царицына хӳтĕлессине вăйлатма йышăннă.

Гашунра вăл вăхăтра хăйĕн отрячĕпе пĕрле Буденный пулнă.

Фронтра йывăр обстановка пулса тăнă. Царицына белогвардеецсен чаçĕсем хупăрласа илме пуçланă. Гашунран 90 километрта, Мартыновка ятлă ялта, партизансен ушкăине тăшмансем хупăрласа илнĕ пулнă, партизансем тăшмана хирĕç 35 кун хушши çапăçнă. Мартыновкăран тухмалли пур çулсене те пӳлсе лартнă пулнă. Хупăрласа илнĕ боецсен апат-çимĕç çителĕксĕр пулнă, патронсем пĕтсе пынă.

Таçта çакăнтарахра, пирĕнпе юнашар, Сталин юлташ хăй те пулнă. Вăл Ворошиловпа пĕрле Царицынран фронта тухса кайнă.

...Эпир Ворошиловпа пирвайхи хут тĕл пулнинне хальхи пекех астăватăп, вăл ун чухне 10-мĕш армин командующийĕ пулнă. Вăл уйрăм отрядсемпе чаçсен командирĕсене канашлăва пухрĕ. Партизансен отрячĕсен паттăр командирĕсем Ворошилов юлташ çине кăштах шанмасăртарах пăхса илеççĕ. Çамрăк, савăнăçлă, хĕвелпе тĕссĕрленнĕ симĕс гимнастерка тата кивĕ, анчах питех те лайăх тасатнă атă тăхăннă, çӳçне кăштах кастарнă Ворошилов, тулаш енчен пăхсан, ун чухне вăрçăри руководитель пек туйăнман темелле.

Эпир уйра, станцинпе юнашар вырăнта ларатпăр, усси ӳстермен командующий пире мĕн калассине кĕтетпĕр. Калас пулать, ун чухне усси ӳстернине пысăккăн хисепленĕ, нумайĕшĕ ĕнтĕ кавалеристсен уссийĕ пек уссисене çӳлелле пĕтĕрсе хунă...

Ворошилов юлташ часах ĕçе тытăнчĕ. Вăл командир-гашунецсене войскăсенче йĕрке тума, шурриссем хупăрласа илнĕ кӳршĕри отрядсене пулăшма тата вĕсемпе пĕрле кĕрешме татăклăн ыйтрĕ. Вăл пире картта çинчи арăнаран курăнакан пăнчă—Мартыновка çине тĕллесе кăтартрĕ.

— Çакăнта çынсем 35 кун хушши çапăçса вилеççĕ,—терĕ вăл,—паян мар пулсан, ыран Мартыновкăри паттăр гарнизона белогвардеецсем касса тăкма пултараççĕ. Мĕнле-ха ĕнтĕ, вĕсен вилĕмĕ пирки кĕлтуса илĕпĕр-и мĕн?

Чаçсен командирĕсем шавлама тытăнчĕç.

— Юлташсене касса тăкасса кĕтни Хĕрлĕ Çар командирĕсемшĕн килĕшӳсĕр япала.

— Килĕшӳсĕр,—терĕç уссилĕскерсем те.

— Оборона кăна туса пыни Хĕрлĕ Çар командирĕсемпе боецĕсемшĕн килĕшӳсĕр япала. Пирĕн хамăрăн наступлени тумалла.

Çакăнтах, кĕске çулпа кайса тата вăйлăн тапăнса, Мартыновка гарнизонне халех çăлса хăварма йышăнчĕç. Çĕрле вара Буденный отрячĕн пĕр батарейи тата 4 эскадронĕ Мартыновкăна пулăшмашкăн кайма тухрĕç. Тăхăрвунă километрлă марша кăнтăрла тĕлне вĕçленĕ. Тылран тата флангсенчен пырса çапса, эпир белогвардеецсен чаçĕсене аркатса ятăмăр, вĕсене пуçĕпех çĕмĕрсе тăкрăмăр. Мартыновецсемпе пĕрлешсе, эпир вĕсемпе пĕрле часах Куберла станцийĕ патне тухрăмăр.

...1919 çулти ноябрьте, Сталин юлташ пуçарнипе Пĕрремĕш Утлă çара туса хурсан, эпир çакна пĕлтĕмĕр: Пĕрремĕш Утлă çарти Реввоенсоветăн членĕ пулма 10-мĕш армин командующийĕ пулнă, эпир ĕлĕкренех палланă Ворошилов юлташа лартнă.

Пирĕн пата армине вăл Михаил Иванович Калининпа пĕрле пычĕ. Çав кунхине Пĕрремĕш Утлă çарăн çĕнĕрен организациленĕ штабĕнче чей ĕçрĕмĕр, вăл историллĕ кун çинчен эпĕ аса илсе каланăччĕ ĕнтĕ. Сĕтел çинче вĕри пашалусем, хăйма тата ытти те пурччĕ, Михаил Иванович хăйĕн кăсъинчен «хăйĕн паекне»—хура çăкăр типĕтсе тунă сухарине туртса кăларчĕ.

— Эсир мĕн тăватăр вара, Калинин юлташ,—терĕ Буденный.—Пирĕн Пĕрремĕш Утлă çарти боецсем шурриссенчен хăйсене валли çăкăр çапăçса илме пултараймаççĕ, тесе шутлатăр-им? Пытарăр хăвăрăн сухарине.

— Пуян пурăнатăр,—терĕ Калинин юлташ.—Пирĕн патра, Мускавра, паек параççĕ, эпĕ сирĕн патра та паек параççĕ пулĕ тесе шутларăм. Ну, апла пулсан, сухарисене пытарма лекет. Тепĕр çĕрте кирлĕ пулĕç...

Каçхине эпĕ хамăрăн дивизине тавăрăнтăм. Штаб патĕнче боецсемпе командирсем пухăнчĕç.

— Каласа пар, начдив,—терĕç вĕсем.—Кам килнĕ унта, мĕн тума килнĕ?

Эпир çĕрлечченех каласа пама пултарайман. Эпĕ вĕсене Совет правительствин пуçлăхĕ, Петроградри слесарь Михаил Иванович Калинин пирĕн пата хăйĕн Мускавра илнĕ сухарисене илсе килнине те каласа патăм...

— Тăхта-ха,—терĕ тахăшĕ украинла,—Калинин пĕччен килмен. Унта тата темĕнле çĕнĕ РВС килнĕ. Кам пулать вăл?

Эпĕ вĕсене Ворошилов кам иккенне каласа патăм. Луганскри слесарь çинчен, 10-мĕш арми командующийĕ тата Ленинпа Сталин юлташсен çывăх тусĕ пулса тăнă çын çинчен каласа патăм.

— Слесарь,—терĕ боецсенчен пĕри,— Хм, эпĕ те слесарь. Калинин та слесарь. Ворошилов та слесарь. Килĕшӳллĕ.

Боецсем кăмăллăн кулса илчĕç.

Хăюллă çапăçаканскер, эскадрон командирĕсенчен пĕри, маларах тухса тăчĕ.

— Вăл паллах ĕнтĕ, слесарьсем пире шыва ямĕç,—терĕ вăл.—Рабочи класс халăхĕ тĕрĕсленнĕ. Анчах эпĕ çакна ăнланмастăп: мĕнле-ха слесарьсем юланутпа çӳреме тата Кубаньри лайăх çĕçпе касма пĕлеççĕ? Хĕç вăл зубило мар вĕт-ха. Унăн хăйĕн пурнăçĕ.

— Эпĕ сана нимĕн те каламăп, — ответлерĕм эпĕ.—Ыран çапăçусем пулмалла. Хăвах курăн.

Ирхине дивизи полкĕсем атакăна кайрĕç. Хăюллă командир çапăçура Ворошилов юлташа кураймарĕ, малтанхи çапăçурах эскадрон командирне вĕри пульă лексе вĕлерчĕ. Вăл çапăçу—вăйлă çапăçу пулчĕ. Икĕ хутчен атака ăнăçсăр пулчĕ, боецсем лашасене каялла çавăрма тытăнчĕç. Çапăçу пынă чи хĕрӳллĕ вырăнта Ворошиловăн сарă лаши курăнса çӳрет. Полкпа пĕрле çĕнĕ атакăна пынă чухне эпĕ акă мĕн куртăм: çапăçу хирĕнчен каялла тухма лашине çавăракан боеца Ворошилов хĕçĕн анлă енĕпе çурăмран çапрĕ, ман пата тата полкăн малтанхи речĕсем патне Ворошиловăн çирĕп сасси янраса çитрĕ.

— Пирĕн çын пулать,—кăмăллăн каларĕ манпа юнашар пыракан ординарец.

Каçхине каннă чухне боецсем пĕрмаях Ворошилов çинчен каласрĕç.

— Кам вĕрентнĕ пулать-ха ăна, çав слесаре, хĕçпе тата пистолетпа ĕçлеме? Питех те пултарать!

Çав вăхăтран пуçласа Ворошилов Пĕрремĕш Утлă çарти мĕнпур боецсен, чи хăрушă вырăнсенче унпа пĕрре кăна мар тĕл пулнăскерсен, чи юратнă çынни пулса тăчĕ. Пĕрре кăна мар Ворошилов юлташ вилĕм умĕнче тăнă. Пĕрре кăна мар, вăл хăй пулемета алла илсе, белогвардеецсен атакисене сирсе янă. Пĕрре кăна мар вăл стройра тăрса атакăна кĕнĕ. Çавăнпăн ĕнтĕ ăна хытă юратнă, хисепленĕ.

Граждан вăрçи пĕтрĕ. Пĕрремĕш Утлă çарăн питех те йышлă массисем, ун чухне каланă пек, ĕçсĕр тăрса юлнă. Питех те пĕлсе, политика тĕлĕшпе питех те çаврăнăçуллăн ĕçлесе, çак вуншар пин боецсене, нумай çулсем хушши вăрçăн йывăр та юнлă ĕçне кăна пĕлнĕскерсене, лăпкă ĕçе тата лăпкă вĕренĕве куçармалла пулнă. Çак ĕçре те Ворошилов юлташ хăй чи пултаруллă организатор тата руководитель пулнине кăтартрĕ.

...Ворошилов юлташăн пурнăçĕ мухтавлă. Вăл утмăл çул тултарнă май, хамăрăн социализмлă аслă Çĕршывшăн тата большевиксен партийĕшĕн малашне те ăнăçлăн ĕçлеме сывлăх сунар.

Генерал-полковник
О. ГОРОДОВИКОВ.

Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă ывăлĕ

(К. Е. Ворошилов çуралнăранпа утмăл çул тултарнă тĕле)

1941 çулти февралĕн 4-мĕшĕнче Климент Ефремович Ворошилов утмăл çул тултарчĕ. Çак 60 султан 40 сулне вăл революциллĕ кĕрешĕве, рабочи класăн ĕçне панă. Унăн пурнăçĕн çулĕ—пролетариллĕ çирĕп революционерăн, пĕр пăрказланми большевикăн, Ленинпа Сталинăн шанчăклă ученикĕн тата соратникĕн пурнăç çулĕ чаплă та илемлĕ.

I.

Ворошилов юлташăн активлă революциллĕ ĕçĕ Ленин марĸсистла партин—çĕнĕ типлă партин, сывхарса килнĕ класлă çапăçусенче пролетариата ертсе пыма пултаракан партин никĕсĕсене хывнă вăхăтри çулсенче пуçланнă. Хайĕн «Что делать?» ятлă произведенинче Владимир Ильич профессиональнăй революционерсен кадрĕсене туса хурас, вĕсене пуринчен малтан рабочисенчен пăхса ӳстерес задача кăларса тăратнă, çакă вăл чи кирлĕ задачăсенчен пĕри пулнă. Владимир Ильич революциллĕ социал-демократирен сине тăрсах çакна тума ыйтнă: «хăйĕн пултарулăхĕсемпе палăрса тăракан кирек хăш рабочине те профессиональнăй агитатор, организатор, пропагандист пулса тăма пулăшмалла...» (Ленин, Сочиненисем, IV том, 462 стр.).

Ворошилов—рабочи класс хушшинчен çуралса тухнă тата Ленинпа Сталин ертсе пынипе большевикла партине туса йĕркеленĕ, парти ялавĕ айĕнче пролетариат массисене патша самодержавине, капитализма хирĕç çапăçăва илсе пынă профессиональнăй революционерсен питех те чаплă представителĕсенчен пĕри.

1899 çулта Алчевскри «Дюмо» ятлă металлурги заводĕнче крановщиксен забастовки пуçланнă, çав забастовкăна вунсакăр çулти Ворошилов ертсе пынă. 1903 çулта вăл РСДР Партине кĕрет, тӳрех большевиксем сумне пĕрлешет, вĕçне çитиех ленинла позицисем сине çирĕппĕн тăрать. Луганскра Гартман заводĕнче ĕçлесе, Ворошилов юлташ часах Луганскри большевиксен пурте шанса, юратса тăракан руководителĕ пулса тăрать. Вăл Луганскри пролетарисене класлă кĕрешӳн стратегине вĕрентет, кĕрешӳри хăватлă хĕçпăшалпа — массăллă-политикăллă стачкăсемпе—усă курма вĕрентет.

Бакура Сталин юлташ ертсе пынипе ĕçлени—Ворошилов юлташăн политикăллă чаплă шкул пулнă. Çакăнта, Бакури малта пыракан пролетарисем — аслă Сталин воспитани панă, пиçĕхтерсе çирĕплетнĕ пролетарисем хушшинче, вăл калама çук чаплă та паха политикăллă опыт илнĕ.

Политикăри. принципиальность, ленинла линирен мĕнле те пулин пăрăннипе те килĕçсе тăманни, рабочи класăн тăшманĕсем тĕлĕшпе хĕрхенӳсĕр пулни—çаксем пулаççĕ ĕнтĕ çулăмлă пролетариллĕ революционерăн Ворошилов юлташăн ытларах характерлă уйрăлăхĕсем. Буржуазин ирсĕр агентурине—меньшевиксене, эсерсене, троцкистсене вăл пĕтĕм вăйпа çĕмĕрет.

Большевикла парти историйĕн пур тапхăрĕсенче те вăл Ленин ялавне çӳлте тытса пырать.

Вырăссен пĕрремĕш революцийĕ хыçăн, хаяр реакци тапхăрĕ пуçлансан, Ворошилов юлташ рабочисен масси хушшинче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет, ăна большевикла лини çинчен ăнлантарса пырать, тĕрлĕрен ликвидаторсен контрреволюциллĕ ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса пырать.

Революцияллĕ ĕçшĕн Ворошилов юлташа пĕр хут çеç мар арестленĕ, ссылкăсене янă. Анчах та патша сатрапĕсем хаярăн хĕсĕрлени, пайтах хăрушлăхсемлĕ йывăр пурнăç унăн ирĕккине, кăмăлне, вăл рабочи класăн ĕçĕ çĕнтерессе çирĕппĕн шанса тăнине хуçайман, йăлтах урăхла, ăна çирĕплетсе пынă.

Империализмлă вăрçă çулĕсенче Ворошилов юлташ Ленин империализмлă вăрçăран граждан вăрçи туса хурасси çинчен кăларса тăратнă лозунга рабочисен, салтаксен массисене ăнлантарса парас тĕлĕшпе питех те пысăк ĕç туса пырать, меньшевикла тата ытти йышши социал-шовинистсене тăрă шыв çине кăларса пырать.

1917 çулта, октябрьпе февраль хушшинчи тапхăрта, Ворошилов юлташ — Ленинпа Сталинăн чи сывăх, шанчăклă ученикĕсенчен пĕри—Петроградра, унтан Донбасра массăсене большевиксен боевой ялавĕсем тавра пĕрлештерес тĕлĕшпе питех те пысăк ĕç туса пырать. Ворошилов юлташ ертсе пынипе Луганскри рабочисем Совет влаçĕ туса хураççĕ.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци çĕнтернĕ хыççăн Ворошилов юлташ çамрăк совет влаçне тата унăн революциллĕ органĕсенче пысăк та нумай енлĕ ĕç сарса ярать. Ворошилов юлташ пĕтĕм ĕçе йăлтах парти хушнă пек, партине кирлĕ пек туса пынă.

Вăл троцкистсене, зиновьевецсене, сылтăммисене хирĕç—каярахпа ютçĕршывсенчи разведкăсен агентури пулса тăнă çав пĕтĕм хаяр бандăна хирĕç пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешет. Парти пухăвĕсенче, рабочисен пухăвĕсенче, парти съезчĕсенче, пичетре хăйĕн выступленийĕсенче Ворошилов юлташ яланах çакна паллă тунă: «пĕтĕмĕшле строительствăна ăнăçлăн туса пыма тата вăл шутрах пролетариллĕ государство оборонин ыйтăвĕсене ăнăçлăн татса пама кирлĕ тĕп услови» (Ворошилов. Статьясем тата сăмахсем. Партиздат, 1936 ç., 279 стр.) вăл—большевикла партин пĕрлĕхĕ, вăл тачă пĕтĕçсе тăни пулать, «пирĕн строительство калама çук организованнăй пулма, обществăллă дисциплинăпа личнăй дисциплинăна çирĕп тытса пыма хушать...» (Ворошилов. Статьясем тата сăмахсем. Партиздат, 1936 ç., 469 стр.).

Ленинпа Сталинăн шанчăклă ученикĕ Ворошилов юлташ совет халăхне Сталин панă çак ăслă кăтарту çинчен яланах аса илтерет: капитализмлă йĕритавралăх хупăрласа тăракан условисенче пурăнакан пирĕн çĕршывăн, нимĕнле «ăнсăртлăхсем» те тата пирĕн тулашри тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен килсе тивме ан пултарччăр тесе, хăйĕн оборонин хăватне, хăйĕн мобилизациллĕ хатĕрлĕхне кунран кунах çирĕплетсе пырас пулать. Ворошилов юлташăн пысăк хисеплĕ выступленийĕсенче, унăн доклачĕсемпе сăмахĕсенче яланах пĕр тĕллев—совет халăхне совет патриотизмĕн туйăмĕпе воспитани парасси, совет патриотизмне çирĕплетсе пырасси, пирĕн социализмлă тăван çĕршыв çине тапăнма хăтланакан кирек мĕнле тăшмана та çĕмĕрсе тăкмаллах отпор пама совет халăхне хатĕр тытса тăрасси.

II.

Октябрьти социализмлă аслă революци çĕнтернĕ хыççăн, Ворошилов юлташ хăйĕн организаторла калама çук пысăк талантне пĕтĕмпех социализмлă государство тăвас ĕçе хурать. Вăл Ленин тата Сталин ертсе пынипе пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара тунă, ăна малтанхи çапăçусене ертсе кĕнĕ, унăн малтанхи çĕнтерĕвĕсене туптанă çынсенчен пĕри пулнă.

Царицына паттăрăн хӳтленĕ çĕрте, Деникина аркатса тăкас, поляксен фронтне çĕмĕрсе тухас, Врангеле пĕтерес, Кронштадтри контрреволюциллĕ пăлхава путарса лартас ĕçсенче — фронтăн кирек хăш участокĕнче те Ворошилов юлташ Сталин юлташ тӳрремĕнех ертсе пынипе ĕçленĕ, унăн стратегиллĕ планĕсене çыпăнса пурнăçласа пынă. Сталин юлташăн шанчăклă ученикĕ, соратникĕ, боевой тусĕ—граждан вăрçин паттăр историне çапла кĕнĕ вăл!

Граждан вăрçи пĕтнĕ хыççăн, Хĕрлĕ Çар çĕнĕлле йĕркеленес, çапăçу ĕçне çине тăрсах вĕренес тапхăра кĕчĕ. Фрунзепе пĕрле Ворошилов юлташ çак ĕçĕн чунĕ пулса тăрать. Сталин кăтартăвĕсем, Сталин ертсе пыни, фронтра чухнехи пекех, унăн çул кăтартса тăракан çăлтăр пек пулнă.

Совет государстви умĕнче чи малта тăракан хăватлă техникăна хĕçпăшалланнă, Совет çĕршывĕ никама пăхăнмасăр пурăнассине хӳтлесе тăма пултаракан вăйлă, хăватлă çар тăвас задача тăнă.

Фрунзе юлташ вилсен, партипе Совет правительстви Ворошилов юлташа çĕршывăн мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсене ертсе пыма лартнă. Сталинăн генеральнăй линине пурнăçа кĕртессишĕн, çĕршыва индустриализацилессишĕн Ворошилов юлташ пĕтĕм вăйпа кĕрешет, çĕршывăн оборонине тĕреклетесси — вăл чи малтан Сталин кăтартса панисене, индустриализацин сталинла планне пĕр пăркаланмасăр тата çирĕппĕн пурнăçласа пырассине пĕлтерни çинчен пĕр ывăнмасăр ăнлантарса пырать.

Пятилеткăсен çулĕсенче совет завочĕсем туса кăларакан, çапăçура кирлĕ чи çĕнĕ техникăллă хатĕрсен никĕсĕ çинче, Хĕрлĕ Çар техникине Сталин юлташ ертсе пынипе пĕтĕмĕшпех урăхлатса çĕнетнĕ.

Хĕрлĕ Çарăн пĕтĕм личнăй составне Ворошилов юлташ çине тăрсах çĕнĕ паха техникăна тимлĕн тата хăвăрт вĕренсе çитме хушнă. Оборона промышленноçĕ умне вăл конкретлă задачăсем кăларса тăратнă, конструкторсемпе, инженерсемпе, изобретательсемпе тӳрремĕнех сыхăнса каланă, вĕсен творчествăллă шухăшне çĕклесе пынă, вĕсен пуçарăвне Хĕрлĕ Çарăн вооруженине çĕнĕрен те çĕнĕрен пĕр чарăнмасăр лайăхлатма çул кăтартса тăнă.

«...Халиччен тунипе лăпланмалла мар,—тесе çырнă Ворошилов юлташ йывăр промышленность работникĕсем патне,—тата лайăхрах тума тăрăшмалла; çитменлĕхсене кам та пулин кăтартса тӳрлетессе кĕтмелле мар, вĕсене çийĕнчех пĕтермелле; çар аллинче пур пек хĕçпăшал образецĕсем пур вăхăтсемшĕн те лайăх пулĕç тесе шутламалла мар, ютçĕршывсенчи пиншер те пиншер изобретательсем, конструкторсем тата лабораторисем калама çук вăрттăнлăхра çĕнĕрен те çĕнĕ вăрçă хатĕрĕсем тăвас тĕлĕшпе ĕçленине астăвас пулать. Пирĕн кая юлма право çук. (Ворошилов. Статьясем тата сăмахсем. Партиздат, 1936 ç., 627 стр.).

1933 çулта Мускав гарнизонĕн партактивне ВКП(б) Центральный Комитечĕпе Центральный Контроль Комиссийĕн январьти пĕрлешӳллĕ Пленумĕн итогĕсем çинчен каласа парса, Ворошилов тивĕçлипех паллă тунă: Сталинла пĕрремĕш пятилеткăна пурнăçланă май, çĕнĕ индустри центрĕсемпе, промышленность гиганчĕсемпе, совхозсемпе, колхозсемпе пуйнă пирĕн çĕршывăн пĕтĕм сăнсăпачĕ улшăннă пекех, Хĕрлĕ Çарăн боевой хăвачĕ те татăклăнах улшăнчĕ.

Социализмлă тăван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç Хасан кӳлли районĕнче, Халхин-Гол сыранĕсем çинче çĕнтерӳллĕн çапăçнă чух, Хĕвеланăç Украинăпа Хĕвеланăç Белоруссине ирĕке кăларас тесе ирттернĕ аслă походра, финн белогвардейщинине хирĕç çапăçнă çĕрте Хĕрлĕ Çар ăна совет халăхĕ панă хальхи çĕнĕ техникăна вăл отлично вĕренсе çитнине куса курăнмалла кăтартса пачĕ.

Çапăçăва хатĕрленес ĕçĕн системине халь СССР Оборона Халăх Комиссарĕ, Совет Союзĕн Геройĕ тата Маршалĕ С. К. Тимошенко ертсе пынипе çĕнетсе, хăйĕн вĕренĕвне май килнĕ таранах чăн-чăн çапăçу обстановки патне çитерсе, Хĕрлĕ Çар хăйĕн çапăçури пултарулăхне, хăватне, пĕтĕм тĕнчери халхи лару-тăру хушнă тăрăх, тата çӳлерех çĕклет.

III.

Хăйĕн тухса каланă сăмахĕсенчен пĕринче Ворошилов юлташ çапла каланă:

«Эпĕ пирĕн партин ывăлĕ пулса тăратăп, халăх умĕнче манăн мĕнле те пулин тава тивĕçлĕ ĕçсем пулсан, унăн эпĕ хамăр партине, хамăр çулпуçăмăра Сталин юлташа тав тума тивĕç».

Çак сăмахсенче Ленинăн тата Сталинăн шанчăклă соратникĕ тата ученикĕ пулса тăракан Климент Ефремович Ворошилов пурнăçĕн пĕтĕм чаплă кунçулĕ палăрса тăрать.

Ленин тата Сталин ертсе пынипе Луганскри слесарь государствăн Ленинла-Сталинла сăнарлă пысăк деятелĕ пуличчен ӳснĕ, коммунистсен партийĕн, совет правительствин пурте йышăннă руководителĕсенчен пĕри, Совет Союзĕн Маршалĕ, ВКП(б) Центральный Комитечĕн Политбюро членĕ, СССР Союзĕн Совнарком Председателĕн заместителĕ, СНК СССР çумĕнчи Оборона Комитечĕн Председателĕ, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ пулса тăнă.

Большевиксемпе пĕрле вăрттăн ĕçленĕ чух, Царицына хӳтлесе çапăçнă паттăр кунсенче, Пĕрремĕш Утлă Çар речĕсенче, рабочисемпе хресченсен социализмлă государствин оборона руководителĕн ĕçĕнче,—яланах тата пур çĕрте те Ворошилов юлташ Ленин тата Сталин кăтартăвĕсем тăрăх çирĕппĕн, пĕр пăркаланмасăр ĕçлесе пырать. Çакăнта унăн вăйĕ, çакăнта Ворошилов юлташа халăхăн чи сарлака массисем калама çук хисепленин тĕп тымарĕ.

Ленинла-Сталинла сăнарлă чăн-чăн политикăллă деятель пулса, Ворошилов юлташ халăхпа, рабочисемпе, колхозниксемпе, пирĕн совет интеллигенцийĕпе нихăçан уйăрлми тачă сыхăнса тăрать. Ворошилов юлташа пĕтĕм çĕршыв пĕлет тата юратать! Совет халăхĕ ăна большевиксен партийĕн тӳрĕ ывăлĕ, Ленинпа Сталинăн çирĕп ученикĕ, паттăр вырăс рабочи класĕн чаплă представителĕ, хăйĕн пĕтĕм пурнăçне ним юлмиччен коммунизмăн аслă ĕçне халавланă çын тесе хисеплет.

Климент Ефремовича вăл утмăл çул тултарнă ятпа саламласа, рабочисем, хресченсем, интеллигентсем, Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем пĕтĕм совет халăхĕ ăна ĕççыннисене савăнăç, социализмлă тăван çĕршыва ырлăх кӳрсе нумай çулсем хушши пурăнма сунать.

Н. КИРИЛЛОВ.

Орденлă Ворошиловградра

ВОРОШИЛОВГРАД, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Орденлă Ворошиловград хулинчи агитаторсем пролетариллĕ полководецăн К. Е. Ворошиловăн пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕсем çинчен калаçусем ирттереççĕ. Климент Ефремовичпа пĕрле ĕçленĕ ватă большевиксем Ворошилов çинчен аса илсе каласа параççĕ. Пархоменко ячĕпе тăракан клубра тата ачасен театрĕнче выставкăсем уçнă.

Юбилея хатĕрленнĕ май театрсенче, клубсенче, паровозсем тăвакан заводăн Ленин ячĕпе тăракан культура Дворецĕнче пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Вырăс драмин театрĕ Ворошилов ячĕпе пысăк концерт пама хатĕрленнĕ.

Хулари художниксем чылай çĕнĕ картинăсем çырнă: «Ворошилов ВКП(б) XVIII съездĕнче сăмах калани», «Сталин, Ворошилов тата Пархоменко Царицын фронтĕнче шуррисене çĕмĕрсе тăкмалли плана сӳтсе-яваççĕ» т. ыт.

К. Е. Ворошилов ячĕпе çыхăннă историллĕ вырăнсенче халăх нумай пулать. К. Е. Ворошилов ячĕпе тăракан революци музейĕнче яланах çын тулли. Январь уйăхĕнче кăна музейра 20 пин çын ытла пулнă. 1917 çулта рабочи депутачĕсен Луганскри Совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ çуртра Ворошилов ячĕпе тăракан революци музейĕн филиалĕ уçăлнă. Унта художествăллă картинăсене тата документсен фотоӳкерчĕкĕсене нумай пухнă. Вăл документсем Ворошилов юлташ 1905—1906 çулсенче боевой дружинăсем тунинчен пуçласа вăл Хĕрлĕ Çара организациленĕ таран кăтартса параççĕ.

Февралĕн 4-мĕшĕнче Ленин ячĕпе тăракан культура Дворецĕнче К. Е. Ворошилов 60 çул тултарнине чысласа хулари ĕççыннисен чаплă пухăвĕ пулса иртет.

Ворошилов юлташ ссылкăра пулнă вырăнсенче

АРХАНГЕЛЬСК, февралĕн 3-мĕш. Елĕк Архангельск губернийĕ пулнă вырăнти уйăм тĕттĕм кĕтессенче, 1907—1912 çулсенче, К. Е. Ворошилов юлташ хăйне ссылкăна янă вăхăта пурăнса ирттернĕ. Ворошилов юлташпа çав çулсенче текех тĕлпулса каласа çынсем унпа тĕлпулни тата чĕререн каласăни çинчен халĕ те манмаççĕ.

Обласри общественность пролетариллĕ питех те паллă полководец утмăл çул тултарнине анлăн паллă тăвать. Архангельскри краеведени музейĕн анлă залĕсенче ултă пайран тăракан пысăк фотовыставка уçăлнă. Вĕсем Ворошилов юлташăн революцишĕн кĕрешнĕ хĕрӳллĕ ĕçĕсене кăтартса параççĕ. Выставка пайĕсенчен пĕринче Ворошилов юлташ Архангельскри ссылкăра пулнине кăтартса панă.

Çакăн пек выставкăнах тата Лешуконский районри Юрома ятлă ялта, Ворошилов пурăннă çуртра уçнă. Халь ăнтĕ унта унăн пурнăçне кăтартса паракан музей уçнă.

Мезенский районри Долгощелье ялĕнче, Ворошилов юлташ пурăннă çуртăн фасачĕ çине, мемориальнăй доска кăларса тăратаççĕ.

Архангельскри предприятисемпе учрежденисенче, обласри колхозсенче, Пинежский, Мезенский, Холмогорский тата ытти районсенчи лесопунктсенче Ворошилов юлташ 60 çул тултарнине асăнса пухусем, калаçусем ирттереççĕ.

(ТАСС).



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Верхнее яăç сывăхĕнчи чугунçул будки (ăлăкхи Екатеринослав губернийĕ), çак будкăра 1881 çулта К. Е. Ворошилов çуралнă. (ТАСС фото-ӳкерчĕкĕ).

Полководец-большевик пурнăçне кăтартакан страницăсем

(Хĕрлĕ Çар музейĕнче)

Музейăн кашни залĕнче халăх хăйĕн прависемшĕн тата çĕнĕ пурнăçшăн паттăрăн кĕрешнин историне кăтартса панă.

15-мĕш залра большевик-полководецăн, Совет Союз Маршалĕн Ворошилов юлташăн кĕрешӳри пурнăçне кăтартса паракан документсене пухнă.

Фотографи çинче тăмран çыпăçтарса тунă, улăм витнĕ çурт, вăл чалăшса кайнă. Çак çуртра мĕнле пурăнни çинчен Климент Ефремович çырса пынă блок-нотăн ултă листи каласа парать.

Ворошилов хăйĕн ашшĕ çинчен, рабочи çинчен каласа парать. Унăн ашшĕ хуçасемпе пĕрмаях вăрçнă, çавăнпа та час-часах ĕçсĕр тăрса юлнă. Çемье выçă ларнă. Климентăн çичĕ çула çитичченех шахтăна ĕçе кĕрсе, ирĕксĕрех тăпраран колчедан суйласа пурăнмалла пулнă. Унăн вăл кашни кун вуншар пус илнĕ. Икĕ çул иртсен, Клим ашшĕпе пĕрле помещик патĕнче кĕтӳ кĕтнĕ. Унтан каллех шахтăра ĕçленĕ, унтан мастерскойĕнче... вунпиллĕк çулта чухне вăл «Дюмо» заводĕнче ĕçлеме кĕрĕшнĕ.

Çамрăк Климент хăюллă пулнă, вăл хăвăртах ӳссе политикăллă организатор пулса тăнă. Курăксем ӳссе тулнă тарăн çырмана вăл вăрттăн пухусем валли суйласа илнĕ. Çав Орловская балка ятлă çырмара Ворошилов рабочисен малтанхи вăрттăн пухăвĕсене туса ирттернĕ.

Ворошилов Луганскра. Музея курма пыракансем умне çамрăк революционер-подпольщикăн, рабочи-большевикăн сăн-сăпачĕ тухса тăрать. Унăн ятне Гартман заводĕнчи пролетарисен боевой дружинин списокне кĕртнĕ. Вăл хутшăннипе, заводри рабочисем директорăн пăнă требованисене çырса хатĕрленĕ. Фотографи çинче Луганскри тĕрмен Ворошилов ларнă камерине кăтартнă: хăйпăнса пĕтнĕ стенисем, мачча айĕнчерехри тĕттĕм чӳрече, тайкаланса тăракан сĕтел, койка çинче виçĕ хăма выртаççĕ.

Екатеринославри губернатор хушнипе, Ворошилова «революциллĕ ĕçсем тунăшăн тата рабочисене забастовкăсем тума хĕтĕртнĕшĕн» Архангельск губернине виçĕ çуллăха ссылкăна янă, ăна полицин сăнаса тăмалла пулнă.

Екатеринославри губернатор çырнă çав хут выртнă вырăн тĕлĕнчи витрина çинче пысăк фотографи çакăнса тăрать. Уездри çуртăн лутра пӳлĕмĕ. Стена çинче гитара, балалайка, çиелтен тăхăнмалли тумтирсем. Чӳречесем витĕр хĕллехи каç курăнать. Тачă ушкăна ссылкăра пурăнакансем пухăнă. Вĕсем хушшинче Ворошилов. Вăл кулать, унăн пит-куçĕнче савăнăçлăх палăрать, унăн куçĕсем витĕр пăхаççĕ, вăл хăйĕн вăйĕсене шанса тăнине палăрать. Çав шанăçа тĕрмесем те, ссылкăсем те, çурçĕрти тĕттĕм каç та хуçас çук.

Фотографипе юнашар воззвани çакăнса тăрать, ăна Ворошилов 9 çул каярахпа, тăшман Луганска тата пĕтĕм республикăна хăратса тăнă вăхăтра çырнă. Воззванин кашни сăмахĕ паттăр, савăнăçлă, жертвăсем тума хатĕр тăракан, çĕнтерӳ пуласса шанса тăракан большевика кăтартса параççĕ.

«...Юлташсем! — çырнă Климент Ефремович. — Кам пролетариатăн идеалне хисеплет, кам Российăна ирĕке кăларасшăн пирĕн тăвансем юхтарнă юна хаклать, кам этемлĕхе ирĕке кăларакан пĕтĕм тĕнчери социализма хисеплет, çавсем пурте пĕр çын юлмиччен—хĕçпăшал патне! Хĕçпăшала алла илсе, йĕркеллĕ хурçă ретсемпе пырса, ĕçĕн тăшманĕсене, харампырсене, белогвардеецсене çапар...

Тĕрĕслĕх пирĕнте! Пирĕнте вăй! Эпир çĕнтеретпĕр!»

Пуринчен малтан хĕçпăшал илекенни Луганскри большевикла организацин руководителĕ Ворошилов пулнă. Машинка çинче пичетленĕ пĕчĕк хут çакна ĕнентерсе парать: Ворошилов чăн-чăнах Луганскри партизансен социализмлă пĕрремĕш отрячĕн начальникĕ пулса тăрать. Большевиксем пытанса ĕçленĕ питех те йывăр кунсенче пиçĕхнĕскер, пулас маршал çар ĕçне тума тытăннă, çав ĕçсем унăн ятне чапа кăларнă, ăна кашни ĕççыннишĕн хаклă та сывăх туса хунă.

Луганскри отряд армин таран ӳссе çитĕннĕ, вăл армин пуçĕнче Ворошилов тăнă. Çак армин геройлă çулне, Дубовязкинчен пуçласа Харьковран çурçĕр-хĕвеланăç еннелле Царицына çити тунă çулне картта çинче хĕрлĕ йĕрпе палăртса хунă. Ворошилов армийĕ, оккупантсене сире-сире пырса, Дон войскисем йышăнса тăракан вырăнсем, контрреволюци пушарĕпе ялкăшакан вырăнсем урлă малалла пынă, çапăçнă, чугунçулсене йĕркене кĕртнĕ, кĕперсене юсанă.

Царицын. Сталин юлташ ертсе пынипе Ворошилов большевикла крепоçе геройла сыхлас çĕрте хутшăнса ĕçлет. Ворошилов пурнăçĕн çав çутă тапхăрĕ çинчен документсем — çав кунсен свидетелĕсем каласа параççĕ.

Удостоверенире çапла çырнă: «Сим удостоверяется, что тов. Климент Ефремович Ворошилов является командующим частями бывших третьей и пятой армий, бывшей армии царицынского фронта и частями, сформированными из бойцов Морозовско-Донецкого округов. Член Совета Народных Комиссаров. Народный Комиссар И. Сталин».

Сталин юлташ пĕрремĕш утлă çара йĕркелесен, вăл çав çара ертсе пыма кавалерин опытлă начальникне Буденныя тата революциллĕ массăсен талантлă организаторне, пысăк полководец таран ӳссе çитĕннĕ çынна — Ворошилова шанса панă.

Картта. Климент Ефремович пулнă тата çапăçу ĕçĕсене ертсе пынă хуласене картта çинче хĕрлĕ йĕрсемпе туса кăтартнă. Акă чи йышлă çапăçусем пынă вырăнсем: Царицын тата Чир, Сальски çеçенхирсенчи Зимовники, Белая глина, Майкоп; Житомир тата Бердичев, Ровно, Дубно, Броды, Замостье, çаксем тахçан маларах Польша панĕсен аллинче пулнă. Отряд-сем—Врангель фронтĕнче. Кунта Ворошилов юлташ хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр ĕçхалăхĕ валли çĕнтерӳ тунă.

Çав залра тăратнă документсенчен чи хумхантараканни çар присягин текстне пичетленĕ листок пулса тăрать.

...Эпĕ Рабочисемпе Хресченсен Правительствин приказĕ тăрăх хамăн Тăван çĕршыва—Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне сыхлама тăма яланах хатĕр тăратăп тата, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн воинĕ пулнипе, эпĕ ăна паттăрăн, пĕлсе, тивĕçлĕн те чыслăн, тăшмана пĕтĕмĕшпех çĕнтерес тĕлĕшпе хамăн юнăма тата пурнăçăма та шеллемесĕр, хӳтлеме тупа тăватăп. Аяла **К. Ворошилова**, тесе алă пуснă.

Документсем нумай, вĕсем полководец-большевикăн, Совет Союзĕн мухтавлă Маршалĕн чаплă пурнăçĕ çинчен каласа параççĕ.

В. ЕФИМОВ.

Совет художникĕсем—К. Е. Ворошилова

Паллă художниксем искусствăн чылай чаплă произведенийĕсене турĕç, çав произведенисенче пролетариллĕ чаплă полководецăн, Сталин юлташăн шанчăклă соратникĕн — Климент Ефремович Ворошиловăн образне палăртса панă. Вĕсенчен нумайĕшне йышлă халăхсем пĕлсе тăраççĕ. Греков художник хăйĕн пĕтĕм творчествинче граждан вăрçин героикине çутатса панă, Греков тунă картинăсем хушшинче «И. В. Сталинпа К. Е. Ворошилов юлташсем Царицын патĕнчи окопсенче» ятлă картина пур. А. Герасимов тунă «И. В. Сталинпа К. Е. Ворошилов» ятлă полотно пысăк мастерлăхпа уйăрăлса тăрать, çав картина хальхи вăхăтра совет художникĕсен чи лайăх произведенийĕсен выставкинче тĕп вырăнсенчен пĕрине йышăнса тăрать. Ворошилов йĕлтĕрпе уçăлса çӳренине кăтартса паракан картинăна художник Бродскнй питех те ăшă кăмăлпа юратса тунă.

ССР Союзĕнчи совет художникĕсен Союзĕн оргкомитечĕ, Мускаври, Ленинградри тата тăванлă республикăсенчи нумай художниксен пуçарăвĕ тăрăх, Ворошилов юлташ çурални 60 çул тултарнă тĕле изобразительнăй искусство произведенийĕсен выставкине организациленĕ, çав выставка, пĕтĕмĕшпе илсен, Ворошилов юлташăн боевой пурнăçĕпе çыхăннă оборона тематикине кăтартса парать.

Выставка февралĕн 4-мĕшĕнче ССР Союзĕнчи совет художникĕсен Союзĕн оргкомитечĕн «Всекохудожник» залĕсенче уçăлать. Кунта живописĕн, скульптурăн, графикăн 300 произведенине тăратнă, вĕсене Совет Союзĕн тĕрлĕ вырăнĕсенчен ярса панă. Нумайĕш картинăсен темисене художниксем большевикла партин чаплă деятелĕн биографийĕнчен илнĕ: Бялыницкий-Бируль тунă «Железнодорожная будка, в которой родился Ворошилов» ятлă картина, Решетников тунă «Ворошилов в Чердынской ссылке» ятлă картина, Жаб тунă «К Е. Ворошилов на Царицынском фронте» ятлă картина т. ыт. те пур Яр-Кравченко «И. В. Сталин, В. М. Молотов тата К. Е. Ворошилов юлташсем А. М. Горький патĕнче ăнара» ятлă композици çырнă. Модоров картини Климент Ефремович маневрсенче красноармеецсемпе калаçнă саманта кăтартса парать. Денисовский картининче зрительсем Ворошилов юлташа искусство работникĕсемпе пĕрле кураççĕ. Сварога картини Ворошилов байдаркăпа кайнине кăтартса парать.

Уйăм произведенисем çĕршыв оборонин тĕрлĕрен темисене, Ворошилов юлташăн çывăх соратникĕсене, пирĕн Тăван çĕршывăн геройĕсене кăтартса параççĕ.

Мускаври 50 скульптор хăйсен çĕнĕçĕсене кăтартнă. Ленинградри мастерсем камернăй скульптура произведенийĕсемпе пĕрлех, выставкăна Карельский перешеекра белофинсене хирĕç çапăçусем пынă вырăнсене лартмалли памятниксен чи лайăх эскизлă проекчĕсене тăратнă.

Графика разделĕнче ӳкерчĕксем, гравюрăсем, офоротсем çĕре яхăн пухнă. (ТАСС).

А. М. Горькин хĕрĕх автографĕ

Ленинградри Салтыков-Щедрин ячĕпе тăракан библиотека А. М. Горькин государство архивне Горькин çĕнĕ автографĕсене (40 яхăн автограф) панă. Вĕсем — Горький «Знание» ятлă издательство юлташлăхĕнче ĕçленĕ тапхăрта çырнă япаласем. Автографсем хушшинче — аслă писатель юлташлăх конторине янă çырусем, Алексей Максимович валли туяннă кĕнекесен списокĕ, Горький сочиненийĕсене пичелесе кăларасси çинчен издательствăпа тунă, писатель хăй алă пуснă договорсем т. ытти материалсем.

Çавăн пекех хăшпĕр авторсен Горький юсанă алçырăвĕсем пур. Вĕсен хушшинче — Гарин-Михайловскийăн çырнă «Инженеры» ятлă паллă романăн алçырăвĕ. (ТАСС).

Парти историне тăрăшса вĕренеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Шĕнерпуçĕнчи вăтам шкулти учительсем «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» харпăрхăй тĕллĕн вĕренеççĕ. Шкулта 15 преподаватель, вĕсенчен 9-шĕ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вăтам звено тăрăх вĕренсе пĕтернĕ.

И. А. Васильев, И. Н. Васильев, С. Лаврентьев, М. Астров, И. Афанасьев, А. Константинов тата М. Петрова учительсем марксизм-ленинизм теорине первоисточниксем тăрăх вĕренсе пыраççĕ. Маркспа, Энгельспа, Ленинăн тата Сталинăн произведенийĕсене вĕренсе пынă май, тĕплĕн конспектсем çыраççĕ.

Хальхи вăхăтра И. А. Васильев юлташ политэкономи ыйтăвĕсене Маркс сăн «Капитал» тăрăх вĕренет. Тата философи ыйтăвĕсене те вĕренсе пырать.

Учительсенчен чылайĕшĕ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» юлашки сыпăкĕсем тăрăх конспектсем çырса, вĕренсе пĕтереççĕ. М. Павлова тата Т. Ярисова юлташсем X—XI-мĕш сыпăксене вĕренеççĕ. Анланман ыйтусем тăрăх ялаях ыйтса пĕлеççĕ. Вĕсене парти историне вĕренес çĕртре С. Лаврентьев юлташ пысăк пулăшу парать. Вăл шкулта час-часах лекцисемпе докладсем туса ирттерет. Нумаях пулмасть вăл Ленинăн «Две тактики социал-демократии в демократической революции» кĕнеки тăрăх лекци туса панă.

ЭНДРЕЙ ПЕТЕРЕ.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Верховнăй командовани çапла пĕлтерет: Германи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем ĕнер Лондонри тата Англин хĕвелтухăç пайĕнчи вăрçă тĕлĕшĕнчен палла объектсене атакăланă. Саутгемптонра бомбăсем пăрахнипе пĕр пысăк нефтехраннилищере вăйлă пушар тухнă. Хĕвелтухăç сыранĕнче Англин суту-илу парохочĕ вăйлăн сиенленнĕ.

Ирландирен хĕвеланăç енче бомбардировщиксем таварсем турттаракан икĕ парохода (вĕсен водоизмещенийĕ 10.000 тонна) путарнă. Кунсăр пуçне Англи гаванĕсем патĕнче минăсем пăрахса çуренĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер тĕттĕм пулса çитсен Германи самолечĕсем Англи çине пĕр бомба та пăрахман. Февралĕн 1-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англире лăпкă пулнă.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ тăватă кун хушшинче Германин Франци çыранĕнче вырнаçтарса лартнă инçете перекен артиллерийĕ Кент графствин тинĕс хĕрринчи районĕсем çине пенĕ. Германи орудийĕсен снарячĕсем Англи территорине 16 километр шалалла ӳкнĕ.

Албанири вăрçă ĕçĕсем

АФИНЫ, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Верховнăй командовани çапла пĕлтерет: ĕнер грексем сăрт-туллă районсенче, тинĕсрен 1.900 метр чухлĕ çӳллĕ вырăнсенче, ăнăçлăн çапăçнă. Противникăн стратеги тĕлĕшĕнчен пысăк вырăнта тăракан позицийĕсене туртса илнĕ; 150 çынна тыткăна илнĕ. Фронтăн ытти участокĕсенче противникăн танковăй чăçĕсем наступлени тума хăтланнă, анчах усăсăр пулнă.

«Пройа» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, итальянецсем, генеральнăй наступлени тума хатĕрленсе, иртнĕ сакăр кун хушшинче фронтăн тĕрлĕрен участокĕсенче вăйлă атакăсем тунă. Анчах Греци войскисем вĕсене вăйлăн хирĕç тăнă, контратакăсем тунă. Итальянецсем каялла чакнă. Поградец районĕнче, фронтăн центральнăй тата тинĕс хĕрринчи секторĕнче итальянецсен контрнаступленийĕ итальянецсем хăйсем поражени тӳснипе пĕтнĕ.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Греци войскисем Клисурăран çурçĕр еннелле хăвăртăн наступлени туса пыраççĕ. Агентство пĕлтернĕ тăрăх, итальянецсен тăватă пысăк атакине сирсе янă.

Итали командованийĕн сводки

РИМ, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Итали командованийĕ çапла пĕлтерет: Греци фронтĕнче разведка тăвакан отрядсемпе артиллерин активлăхĕ палăрать. Пирĕн самолетсем противник войскисем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Киренаикăра Италин бронетанковăй чăçĕсем противник войскисене атакăланă. Противник каялла чакнă.

Хĕвелтухăç Африкăри çурçĕр фронтĕнче çапăçусем вăхăтĕнче Итали войскисем противнике пысăк çухатусем кӳнĕ. Итали войскисен çухатăвĕсем те пысăк. Итали авиацийĕ çапăçусене активлăн хутшăнать. Эгейски тинĕсре Италин пĕр миноносецĕ противник суднисен караванне атакăланă. Противникăн 10 пин тоннăллă пĕр пароходне путарнă.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центральнăй Китайра. Китай командованийĕн представителĕ пĕлтернĕ тăрăх; Чжунсянь—Ичан — Данян секторĕнче (Хубэй провинцийĕ) тата Хэнань провинцийĕн кăнтăр пайĕнче Япони войскисен операцийĕсен тĕллевĕ Китай командованине тĕрĕс мар ориентаци тутарасси пулнă. Японецсем çав операцисемпе Бэйпин — Ханькоу чугунçулне Китай войскисенчен тасатма тата Синьян — Чжэнчжоу çулĕн участокне хăйсен аллине ярса илме хăтланаççĕ.

Хэнань провинцийĕн кăнтăр пайĕнче Япони войскисем, танксем, броневиксем тата авиаци пулăшнипе, январĕн 30-мĕшĕнче Синьянран çурçĕр еннелле, Бэйпин — Ханькоу чугунçулĕ тăрăх наступлени туса пынă.

Январĕн 30-мĕшĕнче Японин икĕ çар карапĕ Китайăн Чжэньхай хулинчи (Чжэцзян провинцийĕн çыранĕ) оборона сооруженийĕсем çине пенĕ.

Çурçĕр тата Кăнтăр Китайри ĕçсем çинчен сведенисем çук.

* * *

Январĕн 30-мĕшĕнче Японин тăватă самолечĕ Шангао хули çине (Цзянси провинцийĕн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕ) бомбăсем пăрахнă. Японин пĕр самолетне Китайăн зенитнăй артиллерийĕ çерсе антарнă.

Февралĕн 1-мĕш. (ТАСС).

Англипе Канада войскисем Исландине оккупацилеНĕ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Аçатсем пĕлтернĕ тăрăх, халăхи вăхăтра Исландире Англипе Канада войскисем 80.000 салтак шутланаççĕ. Рейкьявикра çăрăн пысăк чăçĕсем тăваççĕ. Акюрейрăра 5 пин салтак шутланать. Ытти войскăсем утравăн ытти пункчĕсенче вырнаçса тăраççĕ.

Румынири национальнăй оборона министерстви кăларнă распоряжени

БУХАРЕСТ, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Бухарестри хаçатсем национальнăй оборона министерстви кăларнă распоряженине пичетлеççĕ. Распоряженире çапла каланă: февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа «урамсенче е пӳртсенче влаçсем ирĕк намасăр пухусем тăвакансем çине, çавăн пекех влаçсен распоряженийĕсене пăхăнман çынсем çине çар пăшалĕсенчен переççĕ. Çавăн пекех кам çумĕнче хĕçпăшалсем тупаççĕ, вăл хĕçпăшала илсе çӳреме влаçсем ирĕк паман пулсан, çавăн пек çынсене вырăнтах персе вĕлереççĕ». Генерал Антонеску, тенĕ распоряжение, çĕнĕ пăлхав пулас пулсассăн, ун пек чухне çĕршыва çĕмĕрме хăтланакансене пурнăç те çийĕнчех тата пĕр хĕрхенмесĕр пĕрсе тăкмалла.

«Тимпул» хаçат çапла çырать: ĕнер Бухарестра «студентсен çуртĕнче» хĕçпăшалсен пысăк складне тупнă. Медиаш, Арад, Галацы хулисенчи легионерсен организацийĕсенче 2.961 пин лей конфискацилеНĕ. Халĕ палăртнă тăрăх, пăлхав кунĕсенче легионерсем Зармештпа Туханулра полици казармисене çĕмĕрсе кĕнĕ, унти хĕçпăшалсене илсе тухнă.

БЕЛГРАД, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Болгарири «Вече» хаçат çапла пĕлтерет: Румынире халĕ те нумай çынсене арестлеççĕ. Çĕршывра ĕнер кăна 2.300 пăлхавçăна арестленĕ.

Франци Индо-Китайĕпе Таи чиккинчи лару-тăру

ТОКИО, январĕн 31-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японири информаци совечĕ ятарласах заявлени пичетлесе кăларнă. Заявленире çапла каланă: Франци Индо-Китайĕнчи Сайгон сывăхĕнче Япони çар карапĕ çинче Франципе Таи представителĕсем хушшинче калаçу пулса иртнĕ хыççăн паян Индо-Китайпа Таи хушшинче перемири çинчен килĕшӳ тунă. (Калаçусенчи посредник—Япони делегацийĕ пулнă). Франци Индо-Китайĕпе Таи хушшинчи чикĕри конфликта пĕтĕмĕшпех татса парас ыйтăва мирлĕ конференцире сӳтсе-явăççĕ. Мирлĕ конференци сывăх вăхăтрах Токиора пулать.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Таипе Франци Индо-Китайĕ хушшинче мир çинчен калаçусем пуçланман пулсан та, Таи правительстви Франци Индо-Китайĕн территорине Таи войскисем йышăннă 37 пункта Таи çумне пĕрлештерни çинчен пĕлтернĕ. Перемири тунă пулсан та, ĕнер Франци Индо-Китайĕн войскисем Вантансамака атакăланă, тесе пĕлтереççĕ. Таи войскисем атакăна сирсе янă, пиллĕк танк туртса илнĕ тата 18 çынна тыткăна илнĕ.

Отставкăри адмирал Стирлинг çырнă статья

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС) Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, отставкăри адмирал Стирлинг статья çырса кăларнă. Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азире, тет адмирал, Япони экспансине хирĕç кĕрешме США, Англи тата Голланди Индийĕ штабĕсем пĕрле тума кирлĕ ĕççене палăртса хумалла. Çак районра Япони кĕтмен çĕртен пуçлама пултаракан наступленирен сыхланас тĕлĕшпе çав ĕççене тума кирлех. Çакăнпа пĕр вăхăтрах, тет Стирлинг, США-па Англин Инçет-Хĕвелтухăçĕнче пĕрлешӳллĕ генеральнăй штаб туса хурас пулать.

Голланди Индийĕн тинĕс-çар флотĕнче, тет Стирлинг, 100 карап тата 18 подводнăй лодка шутланать. Вăл каланă тăрăх, Голланди Индийĕн çарĕнче 80.000 çын шутланать. Вăл çарăн 360 самолет пур. Сингапурти сывлăш-çар флотĕнче 600 самолета яхăн шутланать.

Англи çар миссийĕн членĕсем Стамбула пырса çитнĕ

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Турцин генеральнăй штабĕпе калаçусем иртнĕ хыççăн, ĕнер Англи çар миссийĕн делегацийĕн членĕсем — генерал Маршалл Корнуулл тата авиаци вице-маршалĕ Элмхерст Анкарараи Стамбула пырса çитнĕ. Адмирал Келли Анкарарах юлать.

Англири хĕрарăмсен требованийĕ

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Январĕн 30-мĕшĕнче организацисенче тăракан 2 миллион хĕрарăмсен делегацийĕ пенсисем министрĕ патĕнче пулнă, вăрçă ĕçĕсене пула ĕçе юрăхсăр пулса тăнă тĕлсенче хĕрарăмсене тĕрарçысемпе пĕр пекех пособисем тӳлеме ыйтнă. (Правительство вăрçă ĕçĕсенчен инкек курнă çынсене пособисем тӳлеме план палăртса хунă. Хĕрарăмсене арçынсенчен пĕчĕкрех пособи пама палăртнă). Çак делегаци пуçлăхĕ — парламент членĕ врач Эдит Саммерские çапла каланă: вăрçă вăхăтĕнче промышленноçра ĕçлекен хĕрарăмсем арçынсенни пек условисенче, вĕсенни пек машинăсемпех ĕçлеççĕ. анчах та хĕрарăм ĕçе юрăхсăр пулса тăрсан, вăл правительство планĕнче палăртса хунă пособипе тăранса пурăнма пултарайманть.

Охотник Ашим Аралбаев (Киргиз ССР, Иссык-Куль облаçĕ, Тюп районĕ, «Талапкар» колхоз) 1940 çулта беркут пулăшнипе 70 сурок, 4 сăвăр, 18 тилĕ тата 20 мулкач тытнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Ашим Аралбаев хăйĕн беркучĕпе.

А. Бахвалов фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

КРИВОРОЖЬЕ

Криворожье тимĕр руди выртакан вырăн Ингульца юханшыв хĕррипе пырать. Криворожье Украинăри Днепропетровск облаçне кĕрет. Тимĕр тăпри выртакан вырăн 96 километр тăсăлать. 1930 çулта разведка тунă хыççăн Криворожьерен çурçĕр-хĕвелтухăç еннелле татах тимĕр руди выртнине пĕлнĕ, тимĕр руди выртакан вырăн тата 95 километра яхăн тăсăлать мĕн. Çак кайран тупнă тимĕр тăприне уйрăм шутласçĕ, Криворожье руди запасне кĕртмеççĕ.

Криворожье Днепрогэсран тата Хура тинĕсрен инçетре мар пирки, унăн рудипе лайăхрах усă курма пулать. Криворожьере тимĕр руди анчах мар, тата ытти тĕрлĕ çĕрпуянлăхĕсем те пур. Кунта тĕрлĕ çуртиĕрсене тума юрăхлă гранит пур, лайăх, ĕçе юрăхлă хăмăр кăмрăк тата тимĕрле краскăсем (мумия, сурик, охра, алонка, умбра) тĕл пулаççĕ. Çак краскăсемпе халĕ сахал усă кураççĕ.

Криворожьере пуян тимĕр руди выртакан вырăн пысăк. Унтан тата Криворожье таврашĕнче ытти вырăнсенче те тимĕр руди выртакан вырăнсем тупнă. Çак тимĕре те шутласан, Криворожье вара тимĕртен питĕ пуян шутланать.

1884 çулта Криворожьене чугунçулпа Донбаспа пĕрлештерсен, кунти металлурги завочĕсем чылай вăйлăн ĕçлеме пуçланă. Донбасри çĕркăмрăкĕ Криворожье тимĕр тăпринчен тимĕр шăратма юрăхлă пулнă пирки çакăнта хура металлурги пĕрмай вăйланса пырать. 1890 çулччен кунта рудана тĕрлĕ механизмсемсĕрех кăларса заводсене ăсатса тăнă. Çапах та Криворожье тимĕр рудине чылай кăларса, чылай тимĕр панă. 1914 çулхи вăрçă пуçланнă вăхăтра Кривой Рог пĕтĕм Российăра кăларса илсе усă куракан руда хисепĕн 2/3 пайне парса тăнă. Вăрçă вăхăтĕнче Криворожьере руда сахалрах кăлара пуçланă. Граждан вăрçи чухне çак районра час-часах çапăçусем пулнă пирки, кунта руда кăларма пăрахнă, руда кăларакан шахтăсене шыв илнĕ.

Интервентсене хăваласа кăларнă хыççăн Криворожье шахтисем ĕçлеме пуçласçĕ. 1928 çулччен кунта ĕлĕкех ĕçленĕ шахтăсене ĕçе кĕртсе пыраççĕ. 1928 çултан пуçласа çĕнĕ шахтăсем тума тытăнаççĕ, киввисене вăй патаççĕ, аслăлатаççĕ, тĕрлĕ механизмсемпе ĕçлеттермелле тăваççĕ. Ĕлĕкхи вăхăтра кунта этем тата лаша вăйĕпе усă курса анчах ĕçленĕ. Халĕ тĕрлĕ машинăсемпе усă кураççĕ, кунта Донбасри пысăк электростанцисенчен электричество токĕ пырать, çак токпа тĕрлĕ машинăсене ĕçлеттереççĕ. Çакăн пирки Криворожьере тимĕр руди чавса кăларасси кашни çулах ӳссе пырать. 1915 çулта кунта тимĕр руди 4 миллион тоннăна яхăн кăларнă, 1932 çулта 8 миллион тоннăна яхăн кăларнă.

Иккĕмĕш пятилеткăра кунта çĕнĕ металлурги комбиначĕ ӳссе çитеннĕ. Ĕлĕк руда чавса кăларнă та Донбаса шăратма турттарса кайнă. Халĕ тимĕр рудине кăларнă çĕрте вырăнтах шăратаççĕ, Донбаса та илсе каяççĕ. Криворожьере рударан чугун шăратакан домна кăмакисем питĕ пысăк, питĕ вăйлă. Кун пек домнăсем Европăри ытти çĕршывсенче пĕрре те çук. Çакăнтах тин шăратса кăларнă чугунран хурçă шăратмалли цех ĕçлет.

Промышленность вăйланса пынă май кунта Кривой Рог ятлă хула ӳссе, хитреленсе пырать. Ĕлĕк Кривой Рог хулин урамĕсенче е пылчăк, е тусан пулнă, чул сарса лайăхлатнă урам пĕрре те пулман. Эрех сутакан хупахсем тата чиркӳсем анчах пулнă. Хальхи вăхăтра Кривой Рог хулинче 100 пин çын ытла пурăнать. Кунта халĕ Горный тата Научно-исследовательски институтсем ĕçлеççĕ, техникумсен, вăтам шкулсен хисепĕ çирĕме яхăн çитет. Хулара пысăк çуртсем, пахчасем, водопроводсем туса пĕтернĕ, трамвай хулана тĕрлĕ рудниксемпе пĕрлештерет. Днепрогэсран пыракан электричество токĕ пĕтĕм хулари çуртсене, хула урамĕсене, сад-пахчисене çутатать. Хула урамĕсене нумайĕшне асфальтпа витнĕ.

Ĕлĕкхи вăхăтра Кривой Рог хулинче кашни çулах тĕрлĕ эпидемисемпе нумай халăх вилнĕ. Хальхи вăхăтра кунта пурăнакан халăх сывлăхĕ питĕ аван тăрать, сикекен чирсем пĕтнĕ. Хула тавра хулана тĕрлĕ çимĕççем туянтарса тăракан хуçалăхсем кашни çулах çитĕнсе, вăйланса пыраççĕ.

Ф. К.

Пăс хуранĕсене тасатмалли çĕнĕ май

ÇЕМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). «Большевик» заводра пăс паракан хурансем 9. Вĕсене кашнинех 1200—1500 сехет (45—50 кун) ĕçленĕ хыççăн тасатса тăмалла.

Ку тариччен пĕр хурана тасатма пĕр уйăх иртнĕ. Завод чарăнса ан тăтăр тесе, вĕсене яланах пĕрин хыççăн теприне тасатса пынă.

Нумаях та пулмасть «Мосоргтепло» организацийĕ кунта представительсем ячĕ. Вĕсем хурансене питех те хăвăрт тата лайăх тасатни курăнчĕ. Пĕр хурана, вĕсен сĕнĕвĕ тăрăх, 7—8 кун хушшинчех тасатма пулать.

Хурансене кĕске вăхăтра тасатнин секречĕ çакăнта: ку тариччен хурансен ăшне пĕчĕк роликлĕ шарошкăсемпе тасатнă. Ку вара тĕплĕн тасатма пултарайман. Çĕнĕ йĕрке тăрăх шарошка калăпĕ чылаях пысăккă, вăл хăяр евĕрлĕ формăллă. Çитменнине тата шывпа ĕçлени хурансене васкавлă тата лайăх тасатма пулăшать.

Завод дирекцийĕ малашне хурансене çĕнĕ йĕрке тăрăх тасатма пуçлать. Кирлĕ инструментсем тума заказсем панă.

Хар. Лисин.

АВАЛХИ ПУРНĂÇРАН

Монастырьсем халăха çаратса пурăннă

Мускав государстви сарăлса вăйланса пынă май тата XVI ĕмĕрте Хусан ханствине çĕнтерсе тытса илнĕ хыççăн Атăл тăрăхĕнчи халăхсене колонизацилесси вăйланса кайнă. Тутар, мордва, мари тата чăваш халăхĕсене ирĕксĕр хăйсен вырăнĕсенчен хăваласа ярса, вĕсен чи лайăх çĕрĕсемпе утă çаранĕсене тытса илнĕ. Атăл тăрăхĕнчи халăхсене тискеррĕн эксплоатацилеме тытăннă.

Патша самодержавийĕ тата вырăс колонизаторĕсем чăвашсене тискер асапра тытса усрас çĕрте унчухне монастырьсем паллă вырăн йышăннă. Монастырьсем чăваш хресченĕсен çĕрĕсене тытса илнĕ, пулă тытма тата ытти çавнашкал ĕçсем тума чарнă. Иоанн тата Алексей Михайлович патшасем Етĕрне хулин воевочĕ патне янă грамота пĕтĕм лайăх çĕрсене монастыре пама хушнă. Унта çапла каланă:

«И ныне били челом нам в г. Ядринского уезду Сормы Чуваша Пичишко Чебоков с товарищи: в прошлых годах деды и отцы их и они исстари, как г. Ядрин построен, владели в Ядринском уезде в Сурском ухожье ясашными рыбными ловлями и жили де они в тех местах и отары де их в тех местах ныне есть, вниз Суры реки те озеры по правой стороне оз. Назимно да оз. Харакуль, да старая Сурка да Булгаш озеро да Кюрем озеро с истоками по озеру Умен, пашнею и лесом и сенными покосами и со всеми угодьи, а ныне де их же старинные ясашные рыбные ловли и пашною и лес и всякие угодьи отымают у них Гороховского уезду Фролищевы пустыни строитель иеромонах с братиею и владеют де им против своего ложного челобитья и по грамоте не дают».

Çак грамота ĕççыннисенчен вăйпа тытса илнĕ çĕрсене тата шывсемпе çарансене пĕтĕмпех монастырь аллине памалла тунă. Чăваш халăхне çаратасси яланах ӳссе пынă. Вăл ĕмĕртен ĕмĕре куçнă, хресченсене нуша кӳнĕ, вĕсене выçă тăратса хăварнă. Етĕрне воевочĕ Н. Степанов 1614 çулта хăйĕн çырăвĕнче çапла çырнă:

— «Били челом государю Михаилу Федоровичу Ядринского уезда чувашские сотники и старосты и чуваша всего Ядринского уезда, что де они (чуваши—В. И.) бедные люди и животом, лошадьми и всякой животиной опали и государства де... хлеба в Казань им везти нечем..., что им хлеба в Ядринском уезде для государства плавные службы купить не в мочь, потому что они де бедные люди, помирают голодной смертью...»

Монастырьсем, патша чиновникĕсем, помещиксем тата кулаксем чăваш халăхне ĕмĕр-ĕмĕрĕпе эксплоатаци пусмăрĕнче тытса усранă, вĕсем халăха çаратнă тата выçăпа асаплантарса вĕлернĕ.

Искусство работникĕсен канашлăвĕ

Февралĕн 1-мĕшĕнче Чăвашсен Государство Академи Театрĕнче Шупашкар хулинчи искусство работникĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура искусство работникĕсем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса Удмурт АССР-нчи искусство работникĕсене ăмăртăва чĕнчĕç. Канашлу Удмурт АССР-не ăмăртăва чĕнсе чăвашсен театр, музыка тата изобразительнăй искусствине лайăхлатма, искусство училищисенчи вĕренӳпе воспитани ĕçне йĕркелеме пулчĕ.

Канашлу искусство работникĕсем социализмлă ăмăрту мĕнле пыни çинчен хаçатсенче тăтăшах çутатса пыма кирлине палăртрĕ.

Çавăн пекех канашлу искусство работникĕсене Удмурт АССР-ĕн театр, музыка тата изобразительнăй искусствипе паллашма творчествăллă командировкăра пулма Ржанов (искусство ĕçĕсен управленийĕ), Спиридонов (РСФСР тава тивĕçлĕ художникĕ) тата Мокляков (Рабис обкомĕн председателĕ) юлташсене уйăрчĕ.

П. Чичканов.

Пирĕн фотокружок

КАЛИНИНО. Кӳлĕрринчи туллимар вăтам шкул çумĕнче ачасен районри техникăллă станцийĕнче фотокружок ĕçлет. Кружокăн занятийĕсем расписани тăрăх пулса пыраççĕ. Кружока ачасен техникăллă станци инструкторĕ А. Семенов юлташ йĕркелесе пырать. Занятие çӳрекен ачасем пурте фототехникипе интереслесе пыраççĕ. Халĕ çамрăк фотолюбительсем хăйсем фотопа ӳкерме вĕренеççĕ. Унта вĕсем фото аппаратпа вăрмансене кайса, уя тухса йывăççене, тусене тĕпчесе ӳкерсе илнĕ.

НИК. СИДОРОВ.

Паха пуçару

«Большевик» спорт обществи çав кунсенче Канаш—Шупашкар маршрутпа йĕлтĕрлĕ поход туса ирттерчĕ. Вăл похода Канашри финанс техникумĕнче вĕренекен студентсем 7 çын хутшăннă. Поход участникĕсем 93 километра 13 сехет хушшинче тухнă.

Поход комсомолецсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвне хатĕрленнĕ май пулса иртнĕ.

«Большевик» спорт обществин Чăваш республикинчи оргбюровĕ участникĕсене грамотăпа наградăлама обществăн Центральный Совечĕ умне ыйту лартрĕ.

«Большевик» спорт обществин Чăваш республикинчи оргбюровĕн председателĕ **АСТАФЬЕВ.**

Мотоциклпа çӳреме вĕренеççĕ

Шупашкарти колхоз техникумĕнчи студентсем çар ĕçне вĕренме тытăнчĕç. Унта 4 группа организациленĕ. Çак группăсенче мотоциклпа çӳреме те вĕренеççĕ. Занятисем эрнере пĕр хутчен пулса иртеççĕ.

П. ЯКОВЛЕВ.

СУД

Арăмне хĕнекен пӳтсĕр этем

СЕНТĔРВĂРРИ. Хулари Красноармейская ятлă урамра 39-мĕш №-лĕ çуртра пурăнакан А. И. Дубов нумайранпа хăйĕн арăмне хĕнесе пурăннă. Упăшки хĕненĕ пирки М. И. Дубова 7 хутчен вăхăтсăр хырăм пăрахнă пулнă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи 1-мĕш участокри халăх судĕ çак ĕçе пăхса тухса, А. И. Дубова 2 çуллăха тĕрмене хупмалла тунă.

Г. ЗАКАМСКИЙ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ПЛАН

лекций и консультаций, проводимых парткабинетом Чебоксарского горкома ВКП(б) в феврале месяце 1941 года

Числа м-ца	ТЕМЫ ЛЕКЦИЙ	Для кого	Лектор
I. Лекции			
8/II	Книга Ленина „Что делать?“.—Идеологические основы марксистской партии.	Для слушателей цикла лекций по истории ВКП(б).	Андреев.
8/II	Борьба материализма и идеализма в 17-18 веках.	Для слушателей цикла лекций по философии.	Сафрошкин.
10/II	Возникновение простого товарного хозяйства и закон его развития.	Для слушателей цикла лекций по политэкономии.	Железнов.
12/II	Сталинская Конституция об обязанностях и правах граждан СССР.	Публичная лекция.	Поликарпов.
14/II	Было ли начало и будет ли конец мира?	Публичная лекция.	Хаустов.
17/II	Немецкая классическая философия.	Для слушателей цикла лекций по философии.	Сафрошкин.
19 II	XXIII годовщина Красной Армии.	Для докладчиков и агитаторов.	Абасеев.
20/II	Работа Ленина „Шаг вперед, два шага назад“. Организационные основы марксистской партии.	Для слушателей цикла лекций по истории ВКП(б).	Андреев.
24 II	Производство и присвоение прибавочной стоимости—основа капитализма.	Для слушателей цикла лекций по политэкономии.	Железнов.
27/II	Работа В. И. Ленина „Две тактики социал-демократии в демократической революции“.	Для слушателей цикла лекций по истории ВКП(б).	Орленко.
28/II	Заработная плата и эксплоатация рабочего класса при капитализме.	Для слушателей цикла лекций по политэкономии.	Железнов
II. Групповые консультации и теоретические собеседования.			
5/II	Как составлять конспект при самостоятельной работе над изучением „Краткого курса истории ВКП(б)“.	Для работников Водосвета.	Магуськин.
11/II	Меньшевики и большевики в период столыпинской реакции. Оформление большевиков в самостоятельную марксистскую партию.	Для работников Кинофикации.	Магуськин.
12/II	Меньшевики и большевики в период русско-японской войны и первой русской революции.	Для работников Кирпичного завода.	Магуськин.
13/II	Образование Российской социал-демократической раб. партии. Появление внутри партии фракций большевиков и меньшевиков.	Для работников Водосвета.	Магуськин.
15/II	Партия большевиков в период подготовки и проведения Октябрьской Социалистической революции.	Для работников Коопинсоюза.	Магуськин.
18/II	Борьба за создание социал-демократической рабочей партии в России.	Для работников Доруправления.	Магуськин.
21/II	Меньшевики и большевики в период столыпинской реакции. Оформление большевизма в самостоятельную марксистскую партию.	Для работников Спиртзавода.	Магуськин.
26/II	Меньшевики и большевики в период русско-японской войны и первой русской революции.	Для работников Типографии.	Магуськин.

Индивидуальные консультации.

По истории ВКП(б)
Ежедневно, кроме общевыходных дней с 9 до 22 часов. Консультанты тов.: Магуськин, Царев.

По истории СССР.
10, 17, 24 числа с 20 до 22 часов. Консультант Григорьев М. К.

По политэкономии.
13, 26 числа с 20 до 22 часов. Консультант тов. Филимонова.

По диалектическому и историческому материализму.
11, 14, 25 числа с 20 до 22 часов. Консультант тов. Орленко.

По антирелигиозным вопросам.
4, 12, 21 числа с 20 до 22 часов. Консультанты: Цветков, Романов, Хаустов.

Парткабинет.

ЧЕБОКСАРСКОЙ КОНТОРЕ „СПОТАРА“
ТРЕБУЮТСЯ
УЧЕНИКИ
ПО БОНДАРНОМУ ПРОИЗВОДСТВУ.
Справиться: гор. Чебоксары, Красноармейская, дом № 5, контора „Спотара“, телефон № 336.
„Спотара“.

ЧЕБОКСАРСКОМУ
ЛИКЕРО-ВОДОЧНОМУ ЗАВОДУ
ТРЕБУЮТСЯ
ПЛОТНИКИ
на постройку коровника и свинарника. Оплата сдельная. Предоставляется общежитие.
Дирекция.
3—3

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. **Телефонсем:** редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88. çырусемпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 2258.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 2. Ф. Б. 9×84 п. л.